им. М. Горь...
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

171 (9850) № | 1956 çулхи августăн 22-мĕшĕ, юнкун | Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Социализмла харпăрлăха сыхлассине вăйлатар

Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă Директивăсене ăнăçлă пурнăçламалли условисенчен пĕри вăл социализмла харпăрлăха ÿстересе пырасси, ăна тимлĕн сыхласси пулать. Социализмла харпăрлăх пирĕн Тăван çĕршыв вăйĕне пуянлăхĕн çăлкуçĕ, ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатмалли никĕс пулса тăрать. Совет халăхĕ вăй хурса ĕçленипе çак харпăрлăха пĕрмаях нумайлатса пырать тата ăна алăпах упрама тăрăшать.

Социализмла харпăрлăха сыхлассишĕн кĕрешесси партипе совет органĕсен ялахи тĕп задачисенчен пĕри пулнă, халĕ те пулса тăрать. Пĕтĕм совет халăхĕ улттăмĕш пилĕкçуллăхра промышленность, ял хуçалăх тата культура строительстви енĕпе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешнĕ вăхăтра социализмла харпăрлăха сыхласси уйрăмах пысăк вырăна тухса тăрать.

Предприятисен, стройкăсен, учрежденисен руководителĕсен аллине пирĕн государство калама çук пысăк пуянлăх—халăх пурлăхĕ пулса тăракан фабрикăсемпе заводсем, шахтăсемпе рудниксем, транспортпа çыхăну хатĕрĕсем, наха та хаклă оборудовани, топливăпа чĕрташ тата ытти пуянлăх шанса панă. Çак пуянлăхпа тĕрĕс усă курасси—производствăри тăкаксене пĕтересси, продукци бракĕр туса кăларасси, перекетлĕх режимне çирĕп тытса пырасси, çапла вара государство пурлăхне ÿстересси тата ăна упрасси предприяти руководителĕсенчен чылай килет. Калас пулать, хăшпĕр руководительсем хăйсене шанса панă пурлăх çине тимсĕррĕн пăхаççĕ, унпа перекетлĕн усă курмаççĕ. Республикăра халĕ çĕнĕ заводсем, пурăнмалли çуртсем, культура учрежденийĕсем нумай тăваççĕ. Анчах çав стройкăсенче материалсене ытла та перекетсĕр усă кураççĕ: кирпĕче строительство площадкисене контейнерсемсĕр турттарса нумай ватса пĕтереççĕ, кирпĕч купаламалли раствора тирпейсĕр турттараççĕ. Стройка руководителĕсем, строительство материалĕсем çитменнине пĕлсе тăраççĕ пулин те, усăсăр тăкаксене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çакă вăл государство пурлăхĕ çине тимсĕр пăхни çинчен калать. Акă тата тепĕр тĕслĕх. Çĕнĕ заводсем валли çĕршыври промышленность наха оборудовани ярса парать. Завод руководителĕсем çав оборудованне çийĕнчех вырнаçтарса лартмасăр чылай вăхăт хушши юр-çумăр айĕнче вырттараççĕ. Пир-авăр комбинатĕнче, республикăри çу заводĕсенче, МТС-сенче усă курман машинăсем, оборудовани миллионшар тенкĕлĕх выртаççĕ, пăрахăçа тухаççĕ.

Совет стройĕн никам пырса тĕкĕнейми тĕрекĕ пулса тăракан социализмла харпăрлăха хапсăнакан çынсем те пирĕн хушăра тĕл пулаççĕ-ха, çавнашкал çынсем халăхсен тĕп интересĕсене хирĕç пыраççĕ, социализмла обществăн никĕсне хавшатаççĕ. Халăх пурлăхне тустарнине, çаратнине хирĕç пирĕн государство яланах татăклăн кĕрешет. Халăх хуçалăхĕн пур участокĕсенче те пысăк ĕçсем сарăлса пынă вăхăтра, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлес вырăнне государство пурлăхне çаратакан уйрăм çынсене, паллах, никпле те чăтма çук. Анчах хăшпĕр предприятисемпе организацисенче пурлăха çаратакансемпе кĕрешессине халĕ те тивĕçлипе йĕркелемен. РСФСР Вăрман промышленность министерствин Чăваш республикинчи рабочи снабженийĕн управленийĕнче растратăсен хисепĕ çултан-çул ÿсе пырать. УРС начальникне Никандров юлташа пурлăха сыхлассине лайăхлатма кирли çинчен республикăри ертсе пыракан партипе совет органĕсем темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Никандров юлташ çакăнтан тивĕçлĕ вывод тумасть.

Суту-илÿ организацийĕсенче, промысла артелĕсенче обществăлла харпăрлăха сыхлас ĕç янăх пулса пыни çак организацисенче ĕçлеме кадрсем суйласа илесси çине кирлĕ пек пăхманнинчен, пурлăха шанса панă çынсен ĕçне вăхăтра тĕрĕслесе тăманнинчен килет. Суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсем пурлăха çаратнăшăн судна айăпланнă çынсене каллех пурлăхшăн ответлă пулмалла ĕçе илеççĕ. Ревизи органĕсем çавнашкал çынсен халăх пурлăхне тустарнине палăртсан та, хăшпĕр руководительсем вĕсем çинчен судна следстви органĕсене çийĕнчех пĕлтермеççĕ, растратчиксене хÿтĕлесе пурăнаççĕ. Çакăн пек киревсĕр йăлана пĕтермелле.

Государствăна кооперации харпăрлăхне сыхлас тĕлĕшпе прокуратурăпа суд тата милици органĕсем умĕнче уйрăмах пысăк задачăсем тăраççĕ. Республикăри судпа прокуратура органĕсем социализмла харпăрлăха сыхлас тĕлĕшпе паллă ĕçсем туса ирттерчĕ, анчах вĕсен ĕçĕнче çанах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Следстви органĕсем тепĕр чухне уйрăм ĕçсене чăтма çук вăраххăн тĕрĕслеççĕ, çапла вара вăрăсемпе жуликсене çийĕнчех ответ тыттараймаççĕ. Кăçалхи июнĕн 17-мĕшĕнче пирĕн хаçатра Шупашкарти «Кожупряжь» артель председателĕ Воротилов тата вăл ертсе пынă жуликсем ушкăнĕ артель пурлăхне вуншар пин тенкĕлĕх çаратни çинчен çырнăччĕ. Унтанпа икĕ уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Чăваш АССР прокуратури çак хушăра вăрăсен ушкăнĕ пирки нимĕнле мерăсем те йышăнманни ытла та тĕлĕнтерет. Канашри çу заводĕнче ĕçлекенсем хăшпĕр çынсем заводри пурлăха хăйсен харпăрлăхĕ пек тыткаланă, сĕт-çу продукчĕсене пĕрнĕрни хушшинче валеçсе пурăннă. Çапла вара вăрăсен ушкăнĕ 1,5 тонна ытла çу вăрланă. Çак ĕçе прокуратура органĕсем ултă уйăха яхăн тĕрĕсленĕ, вăл халĕ тин суда çитнĕ. Жуликсене çийĕнчех ответ тыттарас вырăнне прокуратура работникĕсем следстви тăвассине ытла та вăраха тăсаççĕ.

Хăшпĕр чухне суд органĕсем пурлăха çаратнă пирки айăпа кĕнĕ çынсем тĕлĕшпе йăваш мерăсем йышăнаççĕ. Иртнĕ кĕркунне Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членне Никитина вăрлăха ĕçсем тунăшăн пĕр çул хушши колхозра ĕçлесе юсанмалла приговор йышăннă. Никитин юсанма шутламан, тепĕр икĕ уйăхранах çĕнĕрен преступлени тунă: колхоз арманĕнчен 121 килограмм çăнăх вăрласа тухнă. Ун хыççăн та районти прокурор Прахеев, халăх судьи Волостнова юлташсем çак преступника тивĕçлĕ ответ тыттарман: каллех тепĕр çул хушши колхозра ĕçлеттермелле тунă. Çак тĕслĕх вăл вăрăсене вырăнсăр шеллени çинчен каламасть-им вара? Суд, прокуратура органĕсен социализмла харпăрлăха сыхлас тĕлĕшпе хăйсене закон панă правăсемпе тĕрĕс усă курмалла, халăх пурлăхне хапсăнакан çынсене вăраха ямасăр тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

Государство харпăрлăхне сыхлас ĕç— пĕтĕм халăх ĕçĕ. Çак ĕçе партипе совет органĕсен тата ытти обществăлла организацисен ертсе пымалла. Совет çыннисем хăйсем ĕçлекен предприятисемпе учрежденисенчи йĕркесĕрлĕхсем çинчен, уйрăм çынсем халăх пурлăхĕ çине алă хуни çинчен час-часах партипе совет органĕсене пĕлтереççĕ. Ертсе пыракан работниксен çав сигналсене çийĕнчех тĕрĕслемелле, хуçалăха юхăнтаракан руководительсене ответ тыттармалла, вĕсене государство пурлăхĕшĕн халăх умĕнче ответлă пулма вĕрентмелле. Ĕççыннисем хушшинче массăлла-ăнлантару ĕçне вăйлатса пынипе социализмла харпăрлăха пĕрмаях ÿстерме тата сыхлама тăрăшмалла.

Обществăлла социализмла харпăрлăха— совет стройĕн экономикăлла никĕсне пур майсемпе те çирĕплетсе пырар!

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Мускавран Финляндие тухса кайни

Финлянди Республикин Президенчĕ Урхо К. Кекконен господин чĕннипе августăн 20-мĕшĕнче каçхине СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Мускавран Финляндие тухса кайнă.

К. Е. Ворошилов юлташпа пĕрле СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Культура министрĕ Н. А. Михайлов, СССР Хут тата йывăçран тĕрлĕ япаласем тăвакан промышленность министрĕ Ф. Д. Варакспн кайнă.

Вĕсемпе пĕр вăхăтрах Финлянди Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Ээро А. Вуори господин кайнă.

Столицăри Ленинградски вокзал. Унта Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, Г. М. Маленков, М. Г. Первухин, М. З. Сабуров, А. Б. Аристов, П. Н. Поспелов юлташсем, СССР Верховнăй Совечĕн Союз Совечĕн Председателĕ П. П. Лобанов, СССР Верховнăй Совечĕн Национальноçсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ П. Т. Комаров, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕсем В. И. Козлова Ш. М. Арушанян, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Н. А. Абрасимов, Е. И. Громов, К. А. Губин, Н. М. Клюкин, З. А. Лебедева, П. Г. Москатов, Н. М. Пегов, А. Е. Петрушев, Н. Э. Прошунин, Д. Расулов, Арми генералĕ И. А. Серов пынă.

Ăсатса яракансем хушшинчĕ СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕсем В. В. Кузнецовпа А. В. Захаров, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн, министерствăсен ответлă сотрудникĕсем, совет хаçачĕсемпе урăх çĕршывсен хаçачĕн представителĕсем пулнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова Финлянди Республикин ССР Союзĕнчи посольствин сотрудникĕсем, çавăн пекех ССР Союзĕнчи дипломатилле представительствăсен пуçлăхĕсем ăсатса янă.

К. Е. Ворошилов хĕвне ăсатма пынă çынсене ырă сывлăх сунать те вагон çине кĕрет.

20 сехетре специальнăй поезд перрон патĕнчен тапранса кайть. (ТАСС).

Етĕрнепе Кувакино районĕсем государствăна тырă памалли плана тултарчĕç

Тырпула хăвăрт пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли плана август уйăхĕнче тултарассишĕн социализмла ăмăртăва вăйлатар!

Кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕ

ВĂРМАР. «Броневик» колхоз членĕсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. План тăрăх 590 гектар çине акмалла пулнă пулсан, вĕсем планран иртересе 50 гектар ыраш акнă.

Кĕрхи тырăсене кăçал çурринче ытла (340 гектар) ансăр тата хĕреслĕ майпа акнă.

Мальцев меслечĕпе çĕре кăпкалатнă вырăнта тырă уйрăмах аван пулнине шута илсе, кăçал çак меслетпе 100 гектар çине акса хăварнă.

Кĕраккине Вăрмар МТС-ĕн 10-мĕш трактор бригади (бригадирĕ И. Мальков) аван ĕçлерĕ. Уйрăммăнах А. Иванова Н. Федоров трактористсем «ДТ-54» тракторпа кашни кунах сменăри нормăна 120—140-шер процент тултарчĕç.

Л. ВЛАДИМИРОВ.

Кĕрхи çĕртме тăваççĕ

ЧКАЛОВСКИ, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красная Знамя» колхоз кăçал тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас енĕпе районта малта пырать. Артель членĕсем кĕрхи тырăсене эрне хушшинче выреа пĕтерчĕç. Ыраш кĕлтине пĕтĕмпех итем çине турттарса капана хывнă. Халĕ Красников машиновея сложнăй молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн аван çапать. Çапнă тырра Хитров, Елагин, Глухов шоферсем хатĕрлев пунктне турттараççĕ. Кăçал пурĕ 2.121 центнер тырă парса, колхоз государствăна обязательство йĕркипе памалли, МТС ĕçĕшĕн тÿлемелли тата закуп шучĕпе сутмалли плана срокчен тултарчĕ.

Кунта ĕçлекен 8-мĕш трактор бригадинчи механизаторсем комбайнпа вырнă ыраш улăмне пухса панă хыççăнах кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕç. Трактористсем 130 гектар çинче кĕрхи çĕртме турĕç.

Çавăн пекех Калинин ячĕпе тăракан колхозра 91 гектар, «Правда» колхозра 42 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

(Хамăр корр.).

Аванс шучĕпе—тырă

ВĂРНАР. Çĕрпелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх ĕçне ăнăçлăн вĕçлесе пырать. Кунта сурхи тырăсене 5 кун хушшинче, кĕрхи тырăсене 3 кун хушшинче пухса кĕртнĕ.

Государствăна 2.800 центнер тырă панă. Халĕ колхозниксем авăн çапаççĕ. Кашни гектартан 15—16 центнер ыраш тухать. Колхоз аванс шучĕпе колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм ыраш валеçсе парать.

Е. ЗАХАРОВ.

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

ТЫРПУЛА ТИРПЕЙЛĔ ПУХСА КĔРТЕССИШĔН ТАТА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ СРОКЧЕН ПАРСА ТАТАССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТУ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ **çапла йышăннă:**

Августăн 20-мĕшĕ тĕлне тырпул пухса кĕртес енĕпе Красноармейски районĕ пĕрремĕш вырăн йышăннă, вăл тырпул пухса кĕртмелли плана 97,3 процент тултарнă. Анчах район государствăна тырă парас енĕпе çиччĕмĕш вырăн йышăннă. Районта уйрăмах авăн çапас ĕçе çителĕксĕр организациленĕ. Çакна май тата Етĕрне районĕ государствăна тырă памалли плана республикăра пуринчен малтан тултарнине шута илсе, КПСС обкомĕпе Министрсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ хăлавне Красноармейски районĕнчен илсе **Етĕрне районне** памалла тунă (КПСС райком секретарĕ Иванов юлташ, райисполком председателĕ Маклашкин юлташ, МТС директорĕ Наумов юлташ).

Государствăна тырă памалли плана тултарас енĕпе Кувакино районĕ (КПСС райком секретарĕ Сизых юлташ, райисполком председателĕ Леонов юлташ, МТС директорĕсем Туницын тата Игнатов юлташсем) тата **Муркаш районĕ** (КПСС райком секретарĕ Мидаков юлташ, райисполком председателĕ Петров юлташ, МТС директорĕ Ижутов юлташ); **тырпул пухса кĕртес енĕпе—Красноармейски районĕ** (КПСС райкомĕн секретарĕ Мустакова юлташ, райисполком председателĕ Федоров юлташ, МТС директорĕ Быков юлташ) тата **Советски районĕ** (КПСС райкомĕн секретарĕ Ефимов юлташ, райисполком председателĕ Лодин юлташ, МТС директорĕ Константинов юлташ) лайăх ĕçленине палăртнă.

КПСС райкомĕсемпе райисполкомсем тăратнă тăрăх, тĕштырă культурисем пухса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă тата хăйсем валли кĕрхи тырă вăрлăхĕ хывса çитернĕ çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. **Буденный ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Ф. П. Юхтанов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **В. А. Токсубаев** юлташ).
2. **Жданов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **П. В. Краснов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Ф. Г. Григорьев** юлташ).
3. **«Родина» колхоз** (председателĕ **Н. А. Волков** юлташ, парторганизаци секретарĕ **В. М. Михайлов** юлташ).

Кувакино районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

Кувакино районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана августăн 20-мĕшĕнче тултарнă.

МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă парасси тата государствăна тырă сутасси малалла пырать.

КПСС райком секретарĕ Д. СИЗЫХ.
Райисполком председателĕ С. ЛЕОНОВ.
Кувакино МТС директорĕ И. ТУПИЦЫН.
Сурмайдан МТС директорĕ И. ИГНАТОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Августăн 20-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

Етĕрне	104
Кувакино	101
Муркаш	93
Шупашкар	90
Канаш	88
Шăхасан	88
Красноармейски	86
Советски	84
Улатăр	81
Калинино	81
Вăрнар	79
Пăрачкав	77
Çĕмĕрле	77
Чурачăк	76
Сĕнтĕр	71
Куславкка	68
Хĕрлĕ Чутай	68
Йĕпреç	65
Елчĕк	65
Ишлей	62
Сĕнтĕрвăрри	62
Тăвай	61
Вăрмар	59
Комсомольски	58
Элĕк	52
Октябрьски	50
Çĕрпÿ	47
Чкаловски	47
Первомайски	46
Шăмăршă	32

КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРĂ ВЫРАС, АВĂН ÇАПАС ТАТА КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКАС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Августăн 20-мĕшĕ тĕлне, процентпа)
Пĕрремĕш графа—МТС-сем, иккĕмĕш — кĕрхи тата çурхи тырăсем вырни, виççĕмĕш—авăн çапни, тăваттăмĕш—кĕрхи тырăсем акни.

Красноармейски	97,3	30,3	67,3
Советски	94,9	36,3	33,4
Шăхасан	90,9	41,1	58,4
Чурачăк	89,9	41,1	54,1
Калинино	89,6	41,3	58,0
Муркаш	87,1	37,2	47,9
Шупашкар	86,0	51,1	61,8
Вăрнар	84,6	48,0	51,7
Элĕк	83,2	37,5	44,3
Комсомольски	81,5	40,8	54,0
Елчĕк	80,8	43,2	46,4
Çĕрпÿ	80,7	30,3	53,8
Йĕпреç	79,5	43,3	49,1
Сĕнтĕр	79,5	41,7	45,8
Сĕнтĕрвăрри	79,2	49,2	75,0
Октябрьски	79,1	36,1	56,8
Вăрмар	78,7	47,8	64,2
Тăвай	78,6	38,0	58,8
Етĕрне	77,9	54,3	32,7
Куславкка	77,7	43,3	40,1
Хĕрлĕ Чутай	77,5	37,6	39,5
Канаш	77,4	50,3	53,6
Çĕмĕрле	77,0	51,5	36,4
Ишлей	76,8	52,3	59,1
Первомайски	73,0	46,7	44,4
Чкаловски	71,6	41,9	27,9
Кувакино	66,0	87,1	57,4
Сурмайдан	65,4	91,8	69,6
Улатăр	62,1	73,9	21,8
Пăрачкав	61,7	86,7	39,6
Шăмăршă	59,6	49,9	41,2
Сиява	56,5	87,8	47,1

Етĕрне районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен çитĕнĕвĕ

Партин XX съезчĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçлассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса, Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем тырпул тухăçлăхне ÿстерме тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине ÿстерме конкретлă обязательствăсем йышăннăччĕ. Вĕсем кăçал кашни гектартан 13 центнертан кая мар тĕштырă, 140 центнер çĕрулми, 250 центнер кукуруза тунипе çулçи туса илессишĕн, сăвакан кашни ĕнерен 1.500-шер килограмм сĕт суса илессишĕн кĕрешеççĕ. Ялхуçалăх ĕçченĕсем çавăн пекех государствăна тырă, сĕт, аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татма пулчĕç.

Йышăннă обязательствăсене пурнăçлама районти парти тата совет организацийĕсен, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕççыннисен халичченех усă курман шалти резервсене мобилизацилемелле пулчĕ.

Районти организацисем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама тимлĕн тăрăшаççĕ. Колхозсенчи тата МТС-ри парторганизацисем, çавăн пекех КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ кăçал колхозсен, бригадăсен ĕçсене тĕрĕслесе пырассине вăйлатрĕç. Çакна нумай тĕслĕхсенчен курма пулать. Колхозсене конкретлă темăсем тăрăх калаçусем, докладсем час-часах пулаççĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тăтăшах тухаççĕ. Стена хаçачĕсем уй-хир бригадисен, выльăх-чĕрлĕх фермисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклесе çыраççĕ. Колхозсенчи тата МТС-сенчи малта пыракансен ĕç опытне сарма пулăшаççĕ. Районта культура учрежденийĕсен ĕçĕ те кăштах лайăхланма пуçларĕ.

Политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатни колхозсемпе МТС-сен производство ĕçĕсене лайăхлатма пулăшать. Иртнĕ çуркунне районти колхозсем çуракине малтанхинчен лайăхрах ирттерчĕç. Ун вырăнти удобренисем ытларах кăларнă. Чылай колхозсем калчасене, уйрăмах кукуруза калчине, лайăх пăхса ÿстерчĕç.

Çакна май, кăçал çанталăк начар тăчĕ пулин те, Маленков ячĕпе, Ворошилов ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем кашни гектартан 12-шер центнер ыраш, Буденный ячĕпе тăракан колхоз вара кĕрхи тата çурхи тырăсем акнă пĕтĕм лаптăк çинчен кашни гектартан 13-шер центнер пухса кĕртрĕç. Нумай колхозсен кукуруза лайăх пулчĕ тата çĕрулми лайăх çитĕнет. Сăмахран, «Парижская коммуна», Буденный ячĕпе тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем силос тума кашни гектартан 450—500-шер центнер кукуруза пухса кĕртеççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозăн кукуруза тата вăйлăрах пулнă, вăл 40 гектар çинчен кашни гектартан 600 — 700-шер центнер пухса кĕртет. Маларах асăннă колхозсем кашни ĕне валли 10—15 тонна силос хывса хăвараççĕ.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозсенче тата МТС-ра уйрăмах пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Районта тырă выреа пĕтересси, хăвăртрах авăн çапасси, государствăна срокчен тырă парса татасси, кĕрешÿ анлă сарăлчĕ. Çак кĕрешÿре коммунистсемпе комсомолецсем малта пыраççĕ, вĕсем сăмахпа та, ĕçпе те колхозниксене механизаторсене тухăçлă ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Тĕслĕхшĕн Буденный ячĕпе тăракан колхоза илĕпĕр. Çак колхозра П. Кочергин тата Б. Токсубаев коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем малта пыраççĕ. Çавăн пекех жнейкăпа ĕçлекен М. Чернова тата А. Здорнов коммунистсем те ĕçре ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

Кочергинпа Токсубаев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем колхозра чи малтан ыраш, пăрça тата тулă вырса пĕтерчĕç. Çак бригадăсенче тырă кĕлтисене тата комбайнпа вырса çапнă вырăнсенче юлнă улăма пĕтĕмпех пуçтарса капан туса лартнă.

М. Черновпа А. Здорнов машинистсем кашни кун 5-шер гектар таран тырă выраççĕ. Вĕсенчен пример илсе, А. Токсубаев, В. Юхтанов, А. Кочергин тата Г. Шмарин машинистсем те тырă вырнă çĕрте тухăçлă ĕçлеççĕ. Халĕ колхозра юлашки гектарсем çинчи сĕлĕ выреа пуçтараççĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхозра тырă турттарнă çĕрте Г. Лаптев, Ю. Бочкарев тата Н. Романов шоферсем хастарлă ĕçпе палăрчĕç. Вĕсем 17 километрти хатĕрлев пунктне куллен 4—6 хут кайса килчĕç.

Çапла ĕçленипе Буденный ячĕпе тăракан колхоз районта чи малтан—июлĕн 31-мĕшĕнче государствăна обязательствăсем тăрăх тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тырри парса татрĕ. Колхоз вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленĕ, халĕ колхозниксене аванс шучĕпе тырă валеçсе параççĕ.

Ытти чылай колхозсенче те, сăмахран, Маленков ячĕпе тăракан, «Большевик», Жданов ячĕпе тăракан, «Правда», Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсенче, пысăк çĕклекенлĕ ĕçлеççĕ.

Маленков ячĕпе тăракан колхозра итем çинчи ĕçе А. Шмелева М. Шатров коммунистсем йĕркелесе пыраççĕ. Вĕсем тăрăшнипе тырă тасатнă çĕрте ĕçсене механизациленĕ. Колхозри шоферсем Б. Шатинин, А. Аникин, Н. Карасев тата В. Лаврентьев юлташсем иртен пуçласа каçчен ĕçлесе, хатĕрлев пунктне тырă турттараççĕ. Хастар шоферсем вĕсен ĕçĕ государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма май панишĕн савăнаççĕ.

Иртнĕ эрнесенче-кăна юлса пынă колхозсем кăçал тырпул пухса кĕртесси тата государствăна тырă панă вăхăтра çитĕнÿсем турĕç. Вĕсен шутне чи малтан Жданов ячĕпе, Ворошилов ячĕпе, Тимирязев ячĕпе тăракан, «Большевик» тата «Правда» колхозсем кĕреççĕ. Вĕсене вăтăр пин шучĕпе колхоза ĕçлеме килнĕ П. Краснов, Г. Бобровский, М. Григорьев, Н. Цветков тата А. Лазарев коммунистсем ертсе пыраççĕ. Асăннă колхозсем тырпула хăвăрт пухса кĕртрĕç, государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре колхозсене МТС коллективĕ пысăк пулăшу парать. Комбайнерсем М. Ширяев, Ю. Горбунов, А. Сторожев юлташсем августăн 20-мĕшĕ тĕлне 270—300-шер гектар тырă вырчĕç (сезонри норма—280 гектар). Халĕ сĕлĕ выраççĕ, каярахпа пулса çитекен культурăсене пухса кĕртеççĕ. Вĕсем сезонра 400-шер гектар çинчи тырпула пухса кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

МТС-ра малта пыракан механизаторсен ячĕсене кăтарту хăми çине тата хисеп хăми çине çырса хураççĕ. Кунсăр пуçне, малта пыракан механизаторсене куçса çÿрекен вымпелсем тата премисем параççĕ.

Етĕрнери хатĕрлев пунктĕнче ĕçе лайăх йĕркеленĕ тырă хатĕрлесе хăвăртлатма май пачĕ. Кунта илсе килнĕ тырра нумай кĕттермесĕр йышăнаççĕ.

Çапла ĕçленипе районти колхозсем пĕрремĕш çĕнтерÿ турĕç—государствăна тырă памалли плана августăн 20-мĕшĕ тĕлне 101,7 процент тултарчĕç. Районти колхозсем хатĕрлев пунктне 101 пин пăт тырă, пуринчен ытла тулă тата ыраш леçсе пачĕç.

Районти колхозсем государствăна тырă сутассине тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă парассине малалла тăсаççĕ.

Г. МЫТНИКОВ,
К. ПАВЛОВ.

РЕПОРТАЖ

ЯЛТИ СТРОИТЕЛЬСЕМ

Малти ретре—электростанци, хыçалта—чăх витине пушар деповĕ.

Ехремкассине Элĕкрен Вăрнара кайакан шоссе çулĕ енчен пырса кĕрекен çын умне питĕ аслă строительство площадки тухса тăрать. Чи малтанах шап-шурă сăрланă пысăках мар илемлĕ çурт курăнса каять. Çуртран тухса çывăхри трансформатора пыракан нумай пралуксем çакăнта колхоз электростанцийĕ пулнине пĕлтерессĕ. Çурта кирпĕчрен тунă.

Строительсен пĕр ушкăнĕ шлакпа бетонран автомашинăсем валли пысăк га-

Александр Моисеевич Ăста платник шутланать...

раж тăвать. Бетонщиксемпе каменщиксем халĕ курăнмассĕ, вĕсем гараж стенисене купаласа пĕтерсе ĕне вити тума кайнă-мĕн. Платниксемпе столярсем, хăма суракансемпе çурт çине витекенсем юлнă. Вĕсем çурт тăрри çавăрассĕ, алăксемпе кантăк рамисем тăвассĕ, хăма сурассĕ тата çурт çине витме тимĕр хатĕрлессĕ. Электростанцирен леререх, çырма урлă тин çеç туса лартнă чăхчĕп вити курăнать. Площадкăра йывăç материалсем çителĕклех пур, вĕсене йĕркеллĕн купаланă.

Сывăх вăхăтра çак вырăнта татах çĕнĕ çуртсем тумалла. Правлени çуртĕ, пе клуб туса лартмалла. Кунта культурăпа хуçалăх центрĕ пулать.

Строительство бригадин бригадирĕ Александр Моисеевич Петухов çуртйĕр тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçлекенсенчен, хăйсен пурнăçĕпе палласштарма хавас пулчĕ. Ăна халĕ Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп Грамотипе наградăланă.

— 1951 çулччен, колхоз пĕрлешсе пысăкланиччен,—терĕ вăл, — общественлла выльăхсем валли типовой витесем тума вăй çитмерĕ. Юлашки çулсенче, уйрăмах артель миллионер пулса тăрсан, ялта çĕнĕ çуртсем çулсеренех тума пуçларăмăр. Колхозниксем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче яла çĕнетмелли генеральнăй план туса çирĕплетрĕç. Халĕ çав плана пурнăçласа пыратпăр.

Колхозăн ялсенче çĕнĕ çурт-йĕрсем—общественлла çуртсем те, уйрăм çынсен çурчĕсем те йышлăн курăнассĕ. Иртнĕ виçĕ çул хушшинче кăна колхозра çĕршер ĕне вырнаçмалăх икĕ вите, пăру вити, лаша вити—иккĕ, сысна вити—иккĕ, общежити çурчĕсем—виççĕ тата силос траншейĕсем чылай тунă. Кусемсĕр пуçне çулсеренех 15—20 колхозник çемйи çĕнĕ пӳртсене пурăнма куçать. Çĕнĕ çуртсен çийĕсене черепица е тимĕр витессĕ.

— Çĕнĕ çуртсем тумасăр мĕнле чăтăн, колхоз ĕçкунĕсем тăрăх тырă тата укçа нумай валеçсе парать вĕт,—теççĕ ял ĕçченĕсем.—Кăçал та кашни ĕçкунĕ пуçне виçĕ килограмран кая тырă тата 4—5 тенкĕрен кая укçа иместпĕр.

Общественлла выльăх-чĕрлĕхе çĕнĕ, ăшă та çутă витесене куçарни артеле пысăк усă панă. Енесем çулсерен сĕт хушса пыраççĕ. Иртнĕ вунă уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1.535 литр сĕт суса илнĕ. Сысна ăшĕ тăвасси те икĕ хута ял ӳсĕт. Колхоз государствăна сĕтпе аш сутсах çур миллион тенке яхăн укçа тăвать. Çакă вăл строительствăра пулаван тăкаксене саплама ытлашшипех çитет.

Кантăр акса туса артель тупăш нумай илет. Ăна государствăна сутни кăна кашни ĕçкунĕ пуçне пиллĕкшер тенкĕ укçа валеçсе пама çитет. Пĕр сăмахпа каласан, ялсене çĕнĕ çуртсемпе илемлетме артелĕн те, артель членĕсен те укçи-тенки çителĕклех.

Паха çурт-йĕр тума ăста специалистсем нумай кирлĕ. Ăçтан тупаççĕ-ха кунта вĕсене?

— Пур çĕрте те хамăр колхозниксемех ĕçлеççĕ,—терĕ хавасланса бригадир. Вăл строитель-ăстасемпе паллаштарма тытăнчĕ. Чи малтанах бетонщик М. Кремеев юлташ ятне асăнчĕ. Çак ĕçе вăл пĕлтĕр колхозрах вĕреннĕ, кăçал вара хăй вуншар çынна вĕрентнĕ. Т. Рыбаковăпа В. Маркова хĕрсем Элĕкри сĕт-кантăр заводне тунă çĕртен штукатурщикпе маляр профессийĕсене туянса килнĕ. Вĕсем тин çеç колхозри электростанци çуртне иккатса-шуратса пĕтернĕ, гараж шуратма хатĕрленессĕ.

Х. Сорокин ĕçĕ çинчен те колхозниксем ырăпа асăнассĕ. В. Федоровпа иккĕшĕ вĕсем çурт çийĕсене çав тери ăста витессĕ—шыв нихçан та анас çук! Çуртсен чӳречисене те сыпăçуллă тунă. Вĕсем вара М. Мышкин столяр аллисем витĕр тухнă. Кантăксене те вăл хăех лартать.

Хăма çуракансем ултăн, виçĕ стан çинче ĕçлеççĕ.

— Часах, акă, электростанци ĕçе кĕрсен,—тет В. Давыдов хăма çуракан,—çак пăчкăсене пăрахатпăр, пилорамăсем çине куçатпăр. Эпир куллен 150—200-шер метр хăма çуратпăр, куннe 3,5—4 ĕçкунĕ таран ĕçлесе илетпĕр.

Строительсем колхозра нумайăн. Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци опытлă строительсем çумне колхозниксене çирĕплетнĕ. Вĕсем вара тĕрлĕ специальноçа хăнăхса, вĕренсе пынă. Малалла та вĕренсе пыраççĕ.

Колхозри строительсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çĕнĕ пиллĕкçуллăхра пысăк та паха çуртсем нумай тумалла, киввисене тĕпрен юсамалла. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе ăнăçлă пурнăçласшăн пĕтĕм вăй-халне парса кĕрешессе çирĕппĕнех шанма пулать.

И. ОРЛОВ.

Фотоӳкерчĕкĕсем авторăн.

Элĕк районĕ «Правда» колхоз.

Кунта кĕçех гараж пулать...

Колхоз председательне хӳтĕлесе

Сергей Павлович Павлов юлташ Çĕрпӳ районĕнчи «Коммунизм» колхоза ертсе пыма тытăннăранпа 8 уйăх çеç çитет-ха. Ялта ĕçлеме 30 пин шучĕпе пынă коммуниста колхозниксем хапăл тусах йышăннă, кăçалхи январь уйăхĕнче ăна правлени председателĕ пулма суйланă.

Малтанхи кунсенче Павлов юлташа пысăк йывăрлăхсем тӳссе ирттерме тивнĕ. Колхозра иртнĕ кĕркунне тĕштырăсене вырса пустарсаланă, анчах итем çинче тата хирте вуншар çапман капансем ларнă, государствăна тырă парса татман, выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлеймесĕрех хĕле кĕрсе кайнă. Унчченхи руководительсем, колхозниксем умĕнче ырă ят илес тесе, кĕркунне çапнă тырра ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе панă та, ун хыççăн колхоз çине алă çеç сулнă.

Çĕнĕ председатель çине тăрса тăрăшнипе колхозниксемпе механизаторсем, иртнĕ хĕлле хаяр сивĕсем пулнине пăхмасăр, 100 тонна тырă çапнă. Çав шутран 60 тоннине государствăна сутса колхоз валли автомашина туяннă, выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ таран тырă уйăрнă, пĕр пайне колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе панă.

Павлов юлташ ĕçлеме тытăннăранпа «Коммунизм» колхозра пысăк улшăнусем пулса пыраççĕ. Чи хаяли вăл колхозниксем хăйсен вăйне, артель хуçалăхĕ кĕске вăхăтрах тĕрекленме пултарассине тарăннăн ĕненни. Колхоз кăçалхи çуракине лайăх ирттерчĕ, мĕнпур лаптăк çинче тухăçлă тырпул çитĕнтерчĕ. «Коммунизм» колхоз членĕсем хăйсен уй-хирĕнче пысăк тухăçлă кукуруза пулнине кăçал куçпа курса ĕненчĕç, кунта пек çăра та çӳлĕ кукуруза таврари колхозсенче çук, кашни гектартан 650—700 центнер кукуруза тунине сулçи тухать.

Халĕ, тырпула пухса кĕртнĕ тапхăрта та, «Коммунизм» колхоз лайăх тĕслĕх кăтартать. Государствăна тырă памалли плана вăл районта чи малтан тултарчĕ. Пур йышши культурăсене те хăвăртрах пухса кĕртессишĕн колхозниксемпе механизаторсем пысăк çĕкленӳпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Кунпа пĕрлех колхозра строительство та пырать. Пĕр витене чулпа кирпĕчрен тăвассĕ, колхоза электрификацилеме хатĕрленессĕ.

Хуçалăхри йĕркесем çирĕпленни, ĕç дисциплини лайăхланни тӳрĕ кăмăллă колхозниксене тивĕçлипе савăнтарать. Анчах хальхи пек йĕркесем кармаçăварсемпе кахалсен кăмăлне каймассĕ, авăннасăр, пĕшкĕнмесĕр колхозра ятпă пурăнмалли çулсем питĕрĕнессĕ. Вĕсен хăйсен йăлине пăрахас шухăш çук-мĕн. Малтан вĕсем çĕнĕ председатель умĕнче йăпăлтатма хăтланнă, унпа ĕç тухманнине курса халĕ ăна хăратма, уй-хир бригадисенче элек сарма тытăннă.

Камсем-ха вĕсем, çĕнĕ председательне килĕшмен çынсем? Иртнĕ çулсенче вĕсем колхозри «актив» шутĕнче тăнă. Халĕ те вĕсем пухусемпе канаш[...]енче «апир колхозшăн» тесе кăшкăраççĕ, çав вăхăтрах хăйсем валли-колхоз хуçалăхĕнчен мĕн те пулин çаклатса юлма тăрăшаççĕ. Акă, хăшпĕрисем колхозшăн мĕнле «тăрăшнине» илсе пăхăпăр.

Н. Иванов—агроном, иртнĕ çулсенче колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ пулнă. Чăтма çук начар ĕçленĕшĕн ăна секретарьтен кăларса пăрахма тивнĕ. Унăн арăмĕ—С. Иванова сĕт-çу ферми заведующийĕ пулнă, ку ферма районта чи кайри вырăнта тăнă. Кăçал С. Павлов юлташ сĕннипе 3.250 тенкĕ тӳлесе ферма валли лайăх ĕне туяннă. С. Иванова çав ĕнене илсе килнĕ чухне, ăна хăйсен килне çавăтса кĕнĕ те, тăватă кун хушши суса пурăннă.

М. Федоров утар заведующийĕ пулнă тата сад ăстĕ шутланса тăнă. Вăл «ĕçленĕ» хушăра утарти 47 пыл хурчĕсен çемйинчен улттăшĕ тăрса юлнă, юлашкинчен вăл медогонкăпа та килне илсе кайса пытарнă. Сад пĕтĕмпех юхăнса кайнă.

М. Иванов «активиста» весовщик пулма уйăрса лартнă. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл 700 килограмм тырă вăрласа сутма ĕлкĕрнĕ.

Август уйăхĕн пуçламăшĕнче колхоз государствăна тырă пама тытăннă. Пирвайхи кунах Н. Иванов шофера хатĕрлесе пунктне тырăпа кайма пулĕнка панă. Вăл ирех тăнă та хăйĕн тăванĕсем валли вутă турттарма кайнă. «Машина ман алăра, ăста кайас тетĕп, çавăнта каятăп!» тесе тулăхрнă вăл правление ӳсĕр пуçпа пырса.

Кармаçăварсемпе кахалсен сĕмĕрле ĕçĕсем çинчен татах та калама пулĕччĕ, вĕсем пĕрин хыççăн тепри тăрă шыв çине тухассĕ. Павлов юлташ сĕннипе правлени айăплă çынсене ответ тыттарать. Анчах лешĕсем парăнма, тӳрленме шутламассĕ. Вĕсен пĕр тĕллев: çĕнĕ председателе мĕнле те пулин майпа колхозран хĕссе кăлармалла, унсăрăн ĕлĕкхи ăнă вырăнсене кĕрсе ларма çук. Юлашки вăхăтра кармаçăвар-хулиганĕсем иртĕхсе кайма пуçланă. Правлениро лару в канашлу пуласси пĕлсен, вĕсем унта ирех ĕçсе ӳсĕрĕлсе пыраççĕ, тӳрех çĕнĕ председатель çине тапăнассĕ. Кладовщик пулнă И. Максимов кӳсран тĕллесех кăшкăрать:

— Вĕрентĕп эпĕ сана мĕнле председатель пулмаллине! Колхозран тухса сирпĕннине сисеймĕн.

Счетовод пулнă Григорьев — ялти паллă хулиган. Кăçал вăл почтальон пулса ĕçлекен колхозницăна пуртăпа касса суранлатнă. Колхозница больницăра сываласа тухнă, анчах тискер хулиганран хăраса ăна суда паман. Нумаях пулмасть Григорьев ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те правление пынă, пухăнса ситнĕ ларăва салатса янă.

Урăлма пĕлмен тепĕр «активист» Г. Клементьев, правление пырса кĕрет те, малтан сĕтел çинчи япаласене ывăтса пĕтерет, унтан С. Павлов юлташа çапса ярать. Ăна ирĕкĕрех çыхса пăрахма тивнĕ.

Тен çак хулиганĕсем халĕ Павлов юлташ ĕçленĕ чухнĕ çеç иртĕхсе çитнĕ пулĕ? Çук, вĕсем унчченхи председательсем чухне те сахал мар мыскараçем кăтартнă.

Колхозра йышăннă мерăсемпех хулигансемпе вăрăсене йĕрке кĕртме çуккине курса, С. Павлов юлташ районти органсенчен, уйрăмах прокуратурăпа милици уйрăмĕнчен çирĕпрех мерăсем йышăнма ыйтать. Анчах нихăшне те ответ тыттарни çук-ха.

Çĕнĕ председателе колхозран хăваласа ярассипе хăратакан И. Максимова тата 700 килограмм тырă вăрланă М. Иванова милици уйăрăнне чĕнсе илнĕ. Кунта вĕсем ырă пуçпа килнĕ ĕнтĕ, çав тери иншар сăмахсемпе калаçнă.

— Максимов тӳрленме сăмах пачĕ, Иванов 700 килограмм тыррине колхоза тавăрса пама пулчĕ,—тенĕ капрахпа милици работникĕсем Павлов юлташа.

Колхозра халиччен питĕпа пурăнма, хулиганла ĕçсем тума хăнăхнă çынсем вĕсене пӳрнепе юнаса ятланипех тӳрленĕç-ши? Председателе хĕнеме тăнă Г. Клементьев хулиган иккĕн пулман пекех йĕкĕлтесе çӳрет. М. Иванов колхозра вăрланă тырра каялла леçсе парасси çав кĕтме пултарĕ? Н. Иванова арăмĕ колхоз ĕнинчен 4 кун хушши сусă юлнă сĕте тавăрса пама шутламассĕ те.

С. Павлов юлташ уй-хирта тата фермăсенче тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем çинчен çав тери ырăтса каласа парать. Çав çынсем битĕ ăна кармаçăварсен халиччехи киревсĕрле ĕçĕсене тупса палăртма пулăшаççĕ. Анчах Павлов юлташ чи лайăх колхозниксенчен правлени тавра чăн-чăн актив пĕтĕçтерес тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ. Общественлла интереса чи çӳлте тытакан, тăван колхозĕшĕн чунтан тăрăшакан колхозниксем правление йышлăн пухăнсан, вĕсем хуçалăха малалла аталантарас ыйтусене сӳтсе явнă чухне Клементьевпа Максимов пек хулиганесем правление кĕрсе ашкăнаймĕç.

Пуçламăш парторганизаци колхоза ертсе пырас ĕçе çителĕксĕр хутшăнни те Павлов юлташа пысăк йывăрлăхсем кӳрет. Парторганизаци секретарĕ—ялти учительница Е. Петрова юлташ колхозри актива пĕтĕçтерес, дисциплинăна çирĕплетсе пырас, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерес ĕçре çĕнĕ председателе сахал пулăшать. Парторганизацире ытти коммунист-учительсем те пур, анчах вĕсем колхозри массăлла-политикăлла ĕçе сахал хутшăнассĕ.

«Коммунизм» колхоз ĕçченĕсем КПСС XX съездĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн, тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсен туса илессине ӳстерессишĕн хастар тăрăшассĕ. Вĕсен пархатарлă кĕрешĕвне чăрмантарма хăтланакан кармаçăварсемпе хулигансен киревсĕр ĕçĕсене татăклăнах чарса лартмалла.

Н. ВОЛКОВ.

(Хамăр корр.).

Пирĕн хаçат

Кăçал Шверник ячĕпе тăракан колхозăн тырă ăнса пулчĕ. Халĕ ăна вырса пухас ĕçсем пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Ырашă 7 кун хушшинче вырса пухнă.

Çак ответлă тапхăрта партбюропа правлени «Колхозник» стена хаçачĕ массăсен чăн-чăн организаторĕ пулса тăчĕ. Тырă вырма тытăннă кун унăн 27-мĕш номерĕ тухрĕ. Номерте 13 заметка пичетленчĕ. «Тухăçлă тырпула хăвăрт пухса кĕртер» ятлă умстатьяна колхоз председателĕ К. Скворцов юлташ çырчĕ. Партбюро секретарĕ И. Тихонов юлташ агитаторсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ. Ытти заметкăсенче симĕс конвейер колхоза мĕнле усă пани, выльăх-чĕрлĕх валли силос ытларах хатĕрлесси, строительство ĕçĕсене хăвăртлатасси тата ытти нумай ыйтусем çинчен çырнă.

Агитаторсем кашни уй-хир бригадинче, фермăсенче тырă вырма тухнă кун кăларнă хаçат номерне вуласа пачĕç, унта хускатнă ыйтусем тăрăх калаçусем ирттерчĕç. Колхозниксем хаçата ырласа йышăнчĕç, колхоз производствинче тата хастарлăрах ĕçleme тытăнчĕç. Тепĕр тăватă кунтан хаçатăн 28-мĕш номерĕ тухрĕ. Унта 14 статьяпа заметка кĕчĕ.

«Колхозникăн» 29-мĕш номерĕнче çитес, 1957 çулхи вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве пуçартăмăр.

«Колхозник» стена хаçачĕ эрнере пĕрре тухса тăрать. Унăн вăйĕ—массăпа тачă çыхăну тытнинче. Кашни номертех бригадирсен, свинарăсен, дояркăсен, рядовой колхозниксен статьисем йышлă пичетленессĕ. Правленипе парторганизаци хаçатра хускатнă сивĕч ыйтусене пăхса тухассĕ, ситменлĕхсене пĕтерсе пыраççĕ.

П. ТЕРЕНТЬЕВ.

«Колхозник» стена хаçат редакторĕ.

Элĕк районĕ.

АНГАРА ÇИНЧЕ

Пĕлместĕп, яланах çапла пулнă-ши, анчах çав кунсенче Ангара çинче пĕр самантлăха та юрă сасси лăпланмарĕ. Вăл вăхăтра Çĕпĕр шывĕ çине, Иркутск гидроэлектростанцине тунă çĕре Мускав, Ленинград, Новосибирск институчĕсенчен студентсем—пулас инженерсем практикăна пырса çитрĕç. Унта кашни кунах инсетри е çывăхри хуласенчен килнĕ çĕршер экскурсантсемпе туристсене курма пулатчĕ. Студентсемпе экскурсантсем ялanах хаваслă та шавлă халăх иккĕне пĕлетĕр ĕнтĕ, вĕсем хаваслă кулăпа янравлă юрăсăр пĕр минут та пурăнаймассĕ пулĕ.

Юрăсем тĕрлĕ чĕлхепе илтĕнетчĕç, çапах та июль пуçламăшĕччен эпĕ унта чăвашла юрланине пĕрре те илтменччĕ-ха.

Унта чăвашсем пуррине пĕлнĕ, анчах темиçе пин çын хушшинче, вĕсем тĕрлĕ сменăра ĕçленĕ вăхăтра, вĕсене шырса тупма ансатах мар пулĕ теттĕм.

Кăçалхи июль пуçламăшĕнче Иркутскра шăрăх кунсем тăчĕç. Ангара шывĕ çу кăçаччен тенĕ пекех сивĕ тăрать, анчах кăçал вăл та кăштах ăшăнчĕ пулас,—гидростанци тунă çĕрте ĕçлекенсем кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче тăрă хумлă шыва чăмачăма кĕме пуçларĕç.

Çав шăрăх кунсенче пĕринче строительсене боевой листоксем салатса парĕç.—Ситес вăхăтрах Ангара çине аслă наступлени пуçлатпăр, халиччен никама та парăнман шыва пĕвелесе лартатпăр,—тесе çырнă унта.

Вара тулăлса шакан Çĕпĕр шывĕ çинче кăнтăрла та, çĕрле те пĕр самантлăха чăрăнмасăр моторсен шавĕ илтĕнме пуçларĕ.

Ун чухне эпĕ ялан строиплощадкăра çӳреттĕм е экскаваторщиксем патне, е арматурщиксем патне пыраттăм, е бетонщиксем мĕнле ĕçленине пăхса тăнăнеттĕм. Манăн вĕсемпе калаçас, кунта ăçтан килнине ыйтса пĕлес килетчĕ, анчах хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче вĕсене чăрмантарас килместчĕ.

Çав кунсенче ман командировка ĕçĕсемпе Иркутска кайсан та, эпĕ унта нумай вăхăт чарăнса тăмастăм, каллех стройплощадкăна васкаттăм,—аслă наступление хатĕрленнĕ кунсенче пĕр минут та вăхăта сая ярас кăмăл çукчĕ.

Иркутскпа гидростанци строительстви хушши—вунă километр. Вĕри кунсенче çав хушша ниепле те автобуспа пăчăхса çӳрес килмест, çавăнпа çав хушша ялан Ангара тăрăх çӳрекен шыв трамвайĕпе—«Сокол» ятлă илемлĕ теплоходпа кайма тăрăшаттăмăр.

Пĕррехинче,—шăпах июль пуçламăшĕнче ĕнтĕ,—эпĕ, хамăн ĕçпе Иркутскра пулнăскер, хăвăртрах гидростанцие кайма шыв трамвайĕ çине ĕлкĕрес тесе, васкасах пристане чупса çитрĕм. Анчах ĕлкĕреймерĕм: эпĕ çитнĕ çĕре илемлĕ «Сокол» пристаньрен уйрăлса кайрĕ.

Унăн палуби çинче хитре тумланнă хĕрсемпе каччăсем тăраççĕ, вĕсем лем каласа хавасăн кăшкăрашаççĕ, пушанса юлнă пристань çине тăрса юлнă пĕр арçын енелле аллисемпе сулаççĕ. Хумсем тата теплоход шавланипа вĕсем мĕн каланине çийĕнчех уйăрса илеймерĕм, теплоход кăшт аякарах кайса гидростанци енелле çула тытсан кăна вара хĕрсенчен пĕри чăвашла сапла хăшкăрнине илтрĕм:

— Вася, пĕчĕк пушмак илме ан ман!

— Манмастăп!—ответлерĕ ăна хирĕç енпа юнашарах пристань çинче тăракан çын чăвашла.

Кӳршĕ çине тĕлĕнсе пăхатăп. Ман умра хĕрӳх патнелле çитнĕ тĕреклĕ арçын тăрать. Çав вăхăтрах хумсене касса пыракан курăк тĕслĕ «Сокол» çинче хĕрсем юрлани илтĕнсе кайрĕ:

Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине
Юрламашкăн...

Чĕрене çав тери çывăх юрă сăмаххисене илтсенĕ май эпĕ пĕрре инçетелле кайса пыракан теплоход çине, тепре хампа юнашар тăракан арçын çине пăхса тăтăм, юрă илтĕнми пулаччĕнех пĕр сăмах та чĕнеймерĕм.

«Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине...» Вăл мана сарлака та мăнаçлă Атăла та, шурă чул кермисемпе хитреленсе ларакан Шупашкара та, хĕмĕл тĕслĕ сукмак пек авкаланса юхакан Кĕтне шывне те, ун таврашĕнчи хам çуралса ӳснĕ йăмралă Тенеçальне те аса илтерчĕ. Çав вăхăтра хам Çĕнĕрте иккене те, ярăн сывлăм пек тăп-тăрă шывлă Ангара хĕрринче тăнине те манса кайрăм пулас...

Кăштах тăхтасан сăмах хушрăм.

— Чăвашсем,—терĕ ман юлташ, палланнă майăн нумай ĕçпе писнĕ тĕреклĕ аллине тăсса парса.—Теплоходпа кайнă хĕрсемпе каччăсем те чăвашсем. Эпир халĕ каçхи сменăра ĕçлетпĕр, çавăнпа кăнтăрлахи вăхăтра Иркутска кино курма килтĕмĕр. Вĕсем кайрĕç ав. Эпĕ магазинсене çӳрене юлтăм. Арăм та юласшăнччĕ те, анчах çак шăрăх çанталăкра пĕчĕк ачана çĕклесе çӳреме йывăртарах пулĕ терĕмĕр. Асăрхамарăр-и? Палуба çинче ача йăтнă хĕрарăм тăратчĕ. Вăл манăн арăм ĕнтĕ, пĕчĕк пушмак илме хушса хăварчĕ...

Çапла пуçланса кайрĕ пирĕн калаçу. Вара эпĕ ман юлташ Василий Семенович Семенов ятлине, вăл Иркутск гидростанцине тунă çĕре Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялĕнчен пин те тăхăрçĕр аллă виççĕмĕш çулта çемйипех куçса килнине пĕлтĕм.

— Кунта эпир хамăр ирĕклĕх килтĕмĕр,—каласа пачĕ Семенов юлташ.—Кунти ĕçе килĕштерсе пăрахрăмăр та, халĕ каялла каяс та килмест. Çапăх та Шупашкăр ГЭС-не тума каймаллăх пулать. Кунта тĕп ĕçсене туса пĕтертĕмĕр, ытти ĕçсене вĕçлеме нумай çынах та кирлĕ мар.

Семенов Отечественнăй вăрçăра та пулнă, Европăри чылай хуласемпе государствăсене фашизм пусмăрĕнчен хăтарасшăн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă, уншăн ăна орденсемпе медальсем панă. Вăрçă хыççăнах вăл Калининград хулинче ĕçленĕ, каярахпа Çĕмĕрле районне таврăннă, колхозра ĕçленĕ, унтан арăмĕпе кунта килнĕ.

Малтанхи вăхăтра вăл бурени мастерĕ пулса ĕçленĕ, ку ĕçе Иркутскра вĕреннĕ, юлашки вăхăтра вара бетон тума чул аврăтакан завода куçнă. Лайăх ĕçленĕшĕн премисем те панĕ.

— Пире лайăх хваттер пачĕç,—савăнса калаçать Василий Семенович.—Иркутскра çемье те хутшăнчĕ. Юрлех пушă вăхăт тупса хăнана пырăр-ха,—манăн арăм хăнасене юратать. Ытти чăвашсемпе паллаштарăп, чăвашла юрлăпăр, ташлăпăр...

Унăн арăмĕ те—Вера Алексеевна Семенова та ĕçлет иккен.

Строительствăри чăн-чăн хуласем пек илемлĕ поселоксем йăлтăртатса тăракан тикĕс асфальтлă урамĕсемпе çĕр хут та утса çӳренĕ пулĕ эпĕ, анчах çав асфальта сарнă çĕрте чăваш хĕрарăмĕ те ĕçленине пĕлмен. Вĕсене Вера Алексеевна сарнă иккен...

Строительствăн пилĕк поселок, кашни поселокрах темиçе урам, Вера Алексеевна вара кашни урама асфальт сарнă çĕрте ĕçленĕ.

— Кунта пирĕн ялсем татах пур,—пĕлтерчĕ мана Семенов, магазинсене кăнс тесе манран уйрăлнă чух.—Мигушов хушаматлă, Николай Иванович, Коля тесе чĕнетпĕр. Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялĕнчех. Эпир унпа пĕр çулах—аллă виççĕмĕш çултах килтĕмĕр. Вăл качăй-ха. Авлантармалла ĕнтĕ,—шӳтлерĕ юлташ,—çула çитет, çирĕм саккăрмĕш çултах çуралнă...

Çав кунах эпĕ строительствăна çитрĕм те, Семенов каласа янă тăрăх, Коля Мигушова та, Çĕрпӳ районĕнчен килнĕ Виктор Виноградова та, Елчĕк районĕнчи Тăрăм ялĕнчен килнĕ Иван Овчинникова та шыраса тупрăм. Эпĕ вĕсем ĕçленĕ çĕрех кайрăм.

Кăтрарах çӳçлĕ, хĕвелпе писсе хуралнă сăнлă Коля Мигушова автомашинăсене юсакан пысăк мастерскойра тĕл пултăм. Çаҫ вăхăтра вăл çирĕмпилĕк тонна таран тиесе турттарма пултаракан самосвалăн темиçе пăтлă радиаторне юсатчĕ.

Вăл Совет çарĕнче пулнă, унтан килсен Иркутск ГЭС-не тунă çĕрте икĕ çул шоферте ĕçленĕ, çавăнпа вăл машинăпа çӳреме кăна мар, ăна лайăх юсама та пĕлет. Кăçал вара ăна машинăсем юсакан мастерскоя куçарнă.

Виктор Виноградова бетон заводĕнче куртăм... Иван Овчинникова ГЭС пĕви çинче тĕл пултăм. Вăл электросварщик пулса ĕçлет, çав вăхăтра вăл, комбинезон тăхăнса янăскер, бетон хывмалли вырăнсене хатĕрлетчĕ.

— Наступление хатĕрленетпĕр, — терĕ вăл самантлăха кăна ĕçе пăрахса, çамки çинчи тарне шăлса илсе.—Çаҫ вырăна бетон хывса пĕтерсенех Ангарана йăлтах пĕвелесе лартатпăр.

Вĕсем мĕнле ĕçленине йăлтах каласа параймăп,—ун валли нумай вăхăт кирлĕ пулĕ. Эпĕ çакна çеç каласшăн: Чăваш республикинчен кайнă Семенов та, Мигушов та, Овчинников та, Виноградов та, хăйсен ĕçне пĕтĕм кăмăлтан юратса тăвассĕ. Иркутск ГЭС-не туса пĕтерсен Шупашкар ГЭС-не тума килме ĕмĕтленессĕ.

Кайран эпĕ вĕсен çĕнĕ çуртсенчи илемлĕ те тирпейлĕ хваттерсенче пулса куртăм. Инçетри чăвашсем пĕр-пĕрипе тăвансем пекех тĕл пулассĕ, кун пек чухне вара савăнса пĕрер черкке ĕçсе пăхсан та çылăх мар пек туйăнать...

Аслă стройкăра тата темиçе кун иртрĕ. Июлĕн 9-мĕшĕнче Ангара çине наступлени пуçланчĕ. Чул, грави, тăватшар тонна турттакан бетон муклашкисем тиенĕ самосвалсем Ангаран пĕвелемесĕр хăварнă вырăнне пычĕç, унта тимĕр баржăсем çинче тытăнса тăракан сарлака кĕпер çине кĕчĕç те, хаярланса шавлакан шыва çĕршер тонна чулпа бетон пăрахма тытăнчĕç. Çав кĕпер çине кашни сехетрех виççĕршер машина кĕрсе тухса тăчĕç.

Çапла икĕ талăк кĕрешрĕç Ангарапа. Вăл часах парăнасшăн пулмарĕ, тăватшар тоннăллă бетон муклашкисене те турпас татки евĕрех юхтарчĕ. Анчах çынсем каялла чакмарĕç. Ангара парăнчĕ...

Вара икĕ талăк хушши ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ строительсем хăйсене паранса лăпланнă Ангара хĕррине пухăнса тăчĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ палланă чăвашсене те куртăм...

— Тен, «Сокол» теплоход çинче юрланă чăваш хĕрĕсем те çакăнтах пулĕ? — ыйтрăм Мигушовпа Семеновран.

— Çакăнта ĕнтĕ,—терĕç вĕсем, хăйсем еплe ывăннине тин туйса илсе.—Анчах çак темиçе пин çын хушшинче епле шыраса тупăпăр вĕсене? Вĕсемпе ыран тĕл пулăпăр...

Пĕр бригадăрах ĕçлекен çичĕ чăваш хĕрне эпĕ тепĕр кунне те кураймарăм: Байкал çинчи пулăçсем патне тухса кайма пулчĕ.

— Унтан таврăнсан эппин, — тесе ăсатрĕ мана Коля Мигушов.—Пушă вăхăт тупса пур чăвашсемпе те пĕрле пустарăнăпăр, вара эпир пирĕн хамăр республикăри çĕнĕ хыпарсене, Братск ГЭС-ĕ çинчен, хăвăр Çĕнĕрте мĕн курса çӳренине каласа парăр. Кайран Ангара çине кимĕпе ярăнма тухăпăр...

Александр КЛЕМЕНТЬЕВ.

Райпо мĕншĕн начар ĕçлет

Калинино районĕ юлашки вăхăтра уйăхран уйăха тавар çаврăнăш планне тултарас тĕлĕшпе республикăра кайра вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Иккĕмĕш кварталта райпо тавар çаврăнăш планне 90 процента яхăн çеç тултарнă. Раймаг вара плана пĕтĕмпе те 78 процент çеç тултарнă. Виççĕмĕш квартала кĕнĕренпе те ĕçре палăрмалла улшăну пулмарĕ, июль уйăхĕнчи план каллех пурнăçланмарĕ.

Калинино районĕ тавар çаврăнăш планне тултарса пыманни мĕнрен килет-ха? Тен районa тавара çителĕксĕр параççĕ пулĕ? Çук, сăлтавĕ начах унта мар: райпо иккĕмĕш кварталта плана тултарма кирлинчен ытларах 600 пин тенкĕлĕх тавар илнĕ. Унсăр пуçне райпо магазинĕсемпе склачĕсенче нормăран ытлашши 2 миллион тенкĕлĕх малтан кӳрсе килнĕ тавар та пулнă.

Тавар çаврăнăш планне тултарас ĕçре пуринчен ытларах тавара халăх ыйтăвне шута илмесĕр кӳрсе килни тата тавара магазинсене вăхăтра, пĕлсе валеçсе памани чăрмантарать.

Магазинсенче халăх ыйтăвне шута илесси çинчен районта тахçантанпах калаçу пырать. Анчах та çакна пĕр магазинра та тивĕçлипе йĕркелемен. Çавна пула райпо правленийĕ час-часах кайман тавара кӳрсе килет. Çавăнпа пĕрлех çакна та каламалла: суту-илӳ базисем час-часах ыйтнă таварсем вырăнне урăх таварсем вагонĕ-вагонĕпе ярса параççĕ. Сăмахран, иртнĕ çуркунне 7 пин банка ытла консервланă купăста ярса панă. Вырăнтах купăста нумай пирки, консервланă купăста нитех те сахал сутăнать.

Райпо склачĕсенчен ялсенчи магазинсене тавар турттарса пырас ĕçе начар йĕркеленĕ. Нумай чухне çĕнĕрен килнĕ таварсем хăшпĕр магазинсене 10—15 кунтан е уйăхран тин çитеççĕ. Магазинсенче халăха куллен кирлĕ таварсем (супăнь, тăвар, краççын) пĕтсе çитсен, продавецсем вĕсене темĕнле тархасласа ыйтаççĕ пулин те пĕр-ик эрнесĕр кĕтсе илеймеççĕ. Райпоран тавар кĕтсе илеймен чухне хăшпĕр продавецсем тавар патне хăйсем те çитсе пăхаççĕ. Анчах та райпо руководителĕсем вĕсене: «хамăрах ярса паратпăр, кам сире «кольцевой завоз» йĕркине пăсма ирĕк панă?!» тесе хăтăрса çеç кăларса яраççĕ. Çавна пулах нумай магазинсенче халăха куллен кирлĕ таварсене час-часах тупса илме çук. Райпо руководителĕсемпе склад работникĕсем таварсене ещĕкĕ-ещĕкĕпе е пички-пичкипе валеçеççĕ. Сăмахран, Ӳсентăран çăвĕ валеçнĕ чухне пĕрисене пĕр пичке панă, теприсене вуççех те лекмен. Бритва сĕççисем пĕтĕмпе те пĕр ещĕк килнĕ пулнă, çапах та ăна ещĕкĕпех пĕр магазина парса янă, ытти магазинсенче çав ĕçĕсене тупса илме те çук. Тырпул пухса кĕмелли вăхăт çитсен сурла-çавасем кӳрсе килнĕччĕ, ăна та валеçсе пама ӳркенсе пĕтĕмпех райцентрти хуçалăх магазинне панă. Çавна пула вара, аякри ялсенче пурăнакан колхозниксен сурла е çава туянма ятарласах райцентра каймалла пулса тăнă.

Урапа-çуна таврашĕсем сутас ĕçе райпо начах та хакламасть. Вĕсене районти предприятисенче туса кăлараççĕ пулин те, райпо çаврăнăçусăрлăхне пула, колхозсен урапа-çуна, пĕкĕ тата ытти çавăн пек хатĕрсем туянма урăх районсене е облаçсене кайма тивет. Шел пулсан та, райпо правленийĕ çав япаласене хăйĕн хуçалăхĕ валли те тупса çитерейместь. Лаша таврашĕсене сутассине çакăн пек йĕркеленине, паллах, килĕшӳллĕ теме çук.

Кадрсене суйласа илес ĕç те тивĕçлĕ вырăнта мар-ха. Хăшпĕр магазинсемпе буфетсенче малтан суту-илӳ предприятийĕсенчен айăпланса тухнă çынсем ĕçлеççĕ. Çавна пула растратăсем чакас вырăнне хушăнса пыраççĕ. Июль уйăхĕ тĕлне растратăсен суммипе 70 пин тенке çитнĕ, иккĕмĕш кварталта кăна растрата сумми 10 пин тенкĕ ытла ӳснĕ.

Райпо правленийĕ (председателĕ Афонин тата унăн заместителĕ Аксаков юлташсем) суту-илӳ предприятийĕсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе тăмасть. Афонинпа Аксаков юлташсем ялсенчи магазинсенче нитех те сахал пулаççĕ. Вĕсем вăхăта ытларах кантурта ларса ирттереççĕ. Райсовет исполкомĕн суту-илӳ пайĕ (заведующийĕ Афанасьев юлташ) халлĕхе нимĕнле ĕç туманнипе çеç палăрса тăрать. Афанасьев юлташ районти суту-илĕве йĕркелеме пулăшас вырăнне, вăхăта хăйĕн пӳлĕмĕнче ларса е йĕста та пулин урăх çĕрте ирттерет.

Тĕрĕслӳ çуккипе пула хăшпĕр магазинсем ерип-ерипе хупă лараççĕ. Сăмахран, Шăнкассинчи магазин эрнере пĕрер кун çеç уçă тăрать, çавăнпа та кашни уйăхрах плана 10—20 процентран ытла тултараймасть. Раймагăн тĕп магазинĕ инвентаризаци тунă ятпа июль уйăхĕнче 15 кун хушши ĕçлемерĕ.

Калинино районĕ начар ĕçлени çинчен Чăвашпотребсоюз правленийĕ пĕлмест теме çук, анчах та вăл ăна тивĕçлĕ пулăшу парас вырăнне кăтартусем парса çеç пурăнать. Кăтартусем памасть тесе айăплама чăнах та çук ĕнтĕ: Чăвашпотребсоюз правленийĕ районa вăтам шутпа кашни кун сахалтан та 20 хутран кая мар ярса памасть. Пĕр кунхине, акă, районa Чăвашсоюзран 24 çыру килчĕ, хăшпĕр кунсенче унтан та ытларах килет. Райпо правленийĕн председателĕ Афонин юлташ каланă тăрăх, Чăвашсоюз çырăвĕсене пăхса тухма кăна куллен 2—3 сехет вăхăт иртет, ответсем памалла пулсан вара, пĕтĕм ĕç кунĕ хут çырнипех иртсе каять.

Директивăсемпе кăтартусем паниипех суту-илĕве кирлĕ пек йĕркелеме çук. Чăвашпотребсоюз райпотребсоюзсемпе райпосене конкретлăрах ертсе пырсан, вырăнти работниксене тивĕçлĕ пулăшу парсан, ĕçри ситменлĕхсем хăвăртрах пĕтĕччĕ, суту-илӳ предприятийĕсем халăх ыйтăвĕсене туллирех тивĕçтерĕччĕ.

Р. МОИСЕЕВ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Ĕçе тĕпчеме тăрăшмасан"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 6-мĕшĕнче «Ĕçе тĕпчеме тăрăшмасан» ятлă çыру пичетленчĕ.

Чăваш АССР Юстици министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Çĕрпӳ районĕн халăх судьи Петров тата суд исполнителĕ Данилов юлташсен ĕçри йăнăшĕ çинчен Юстици министерствинче ирттернĕ канашлура пăхса тухнă, вĕсене хытă асăрхаттарнă.

„Рабочисемшĕн тăрăшмаççĕ"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекенсен «Рабочисемшĕн тăрăшмаççĕ» ятлă çырăвĕ пичетленнĕ.

Шупашкар хула Совет исполкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак районти водопровода сентябрь уйăхĕ тĕлне юсаса пĕтерме, ĕçсыннисен килĕсене электричество кĕртме йышăннă, пир-авăр комбинатĕнчен пуçласа Б. Хмельницкий урамне çитиччен ятарласа автобуссем çӳремелле тунă, суту-илӳ ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

(Редакцие килнĕ çырусене пăхса тухни)

Чкаловски районĕнчи Сăнăт ял Советĕнчи шкула ял çыннисем нумай пулăшаççĕ. Ку ĕçе район Совечĕн депутачĕ И. Марков юлташ пуçарса пырать. Ял çыннисем пулăшнипе сăнав участокĕ тавра карта тытса тухнă. Шкул участокĕ — районта чи лайăххи. Шкул—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ.

Кантăксем лартнă, сĕтел-пукансене, партăсене, шкафсене юсанă. Вĕренме кайма çул çитнĕ ачасене пурне те шута илнĕ. Шкул тата учительсем валли 320 кубометр вутă кӳрсе килнĕ. Вăл çулталăк хутма çитет. Ял Совечĕ (председателĕ Сулагаев юлташ) тата колхоз правленийĕ (председателĕ И. Марков юлташ) пулăшнипе ачасен колхоз машинипе Ульяновск хулине кайса курнă. Кунта вĕсем виçĕ кун хушши аслă Ленин пурăннă вырăнсене курса çӳренĕ.

Канаш районĕнчи Карăклăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн класĕсем икĕ çуртра вырнаçнă пулнă. Крупская ячĕпе тăракан колхоз пулăшнипе кăçал çĕнĕ шкул çурчĕ туса лартнă. Вĕренӳре кирлĕ пособисем, оборудовани тата вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кун çинчен пире М. Михайлов юлташ çырса пĕлтерчĕ.

Тĕмерти вăтам шкулти ĕçсем çинчен А. Зобов юлташ çапла çырать:

— Кăçал икĕ класс çуртне тĕпрен юсатпăр. Тепĕр икĕ класлă çурта (ял варринче ларакаскере) шкул участокĕ çине куçаратпăр, ун çумне тепĕр класс вырнаçмалăх çĕнĕ çурт туса лартатпăр. Çапла майпа çитес вĕренӳ çулĕнче икĕ сменăпа ĕçлессинчен хăтăлатпăр. Шкулăн кăçал мастерской пулать.

И. Шмелев юлташ Советски районĕнчи Килтĕпри çичĕ çул вĕренмелли шкул, Г. Тарасов юлташ Иплей районĕнчи Ишекри вăтам шкул, В. Сорокин юлташ Етĕрне районĕнчи Мăн Йĕкĕтри çичĕ çул вĕренмелли шкул, В. Мартынин юлташ Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти вăтам шкул, П. Яжейкин юлташ Советски районĕнчи Турн Ачакри çичĕ çул вĕренмелли шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленни çинчен çырса пĕлтерчĕç. Анчах чылай çĕрте шкулсем вĕренӳ ĕçне пуçăнма хатĕр мар-ха. Октябрьски районĕнчен А. Петров корреспондент Кĕчкей, Шанарпуç, Çатракассинчи шкулсенче мастерскойсем тумани, вĕсем валли инвентарьпе оборудовани тупмани çинчен çырать.

П. Павлов корреспондент Чурачăк райисполкомĕ Калайпуçĕнчи пуçламăш шкула валли вутă уйăрса памани çинчен çырса пĕлтерет. Шкул заведующийĕ ку ыйтупа район центрне тăватă хут та çитнĕ, анчах райăнан ыйтăва çав-çавах татса паман.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Упукушкăнчи пуçламăш шкулăн вутă çук. Шкул çуртне те, кăмакисене те, партăсене те юсаман. Кунăн чи малтан шкул заведующийĕ Иванов юлташ айăплă. Вĕренӳ çулне апăх хатĕрленни ăна начах та хумхантармасть,—тесе асăрхаттарать А. Васильев юлташ.

— Анаткасри пуçламăш шкул (Иплей районĕ) вĕренӳ çулне начар хатĕрленет,—тесе çырать П. Леонидов корреспондент.— Шкул çурчĕ питĕ япăхса кайнă. Пĕр мăрьи катăлса аннă. Чӳрече кантăкĕсем çĕмĕрĕлнĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Ку ĕçре ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерни кирлĕ. Кашни шкулта ачасене вĕренме лайăх условисем пулмалла. Шкулсем, интернатсем, учительсен хваттерĕсем валли вутă çителĕклĕ пултăр. Вĕренӳ кабинечĕсемпе мастерскойсем тумалла, вĕсене кирлĕ оборудованипе пуянлатмалла. Çак ĕçсене тума вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене, колхозсене, предприятисене—шкул шефĕсене анлăрах хутшăнтармалла.

АВАЛХИ ЯПАЛАСЕМ

Кăçал пирĕн республикăра археологи экспедицийĕ ĕçлени çинчен «Коммунизм ялавĕн» иртнĕ номерĕнче «Ученăй советсен ларăвĕнче» ятлă пĕлтерӳре çырăнчĕ. Паянхи номерте экспедицин 1-мĕш отрядне ертсе пынă аспирант Г. А. Федоров-Давыдов тата 2-мĕш отрядне ертсе пынă истори наукисен кандидачĕ Н. В. Трубникова пирĕн хаçат валли çырнă статьясене пичетлетпĕр.

Археологи экспедицийĕсем пирĕн республика территорийĕнче иртнĕ вăхăтра та ĕçленĕ. Сăмахран, Куславкка районĕнчи Паланкасси, Шупашкар районĕнчи Апаш тата Çĕрпӳ районĕнчи Тавăнкасси патĕнчи авалхи масарсене чавса пăхса, истори наукишĕн хаклă япаласем тупнă. Кăçалхи экспедици ĕçĕсем чăваш халăхĕн историне тĕпчесе вĕренмелли археологи материалĕсене татах пуянлатрĕç.

X—XII ĕмĕрсенчи хула вырăнĕ

Археологи экспедицийĕн 1-мĕш отрячĕ Чкаловски районĕнчи Тикеш ялĕ патĕнчи авалхи хула (городище) вырăнне чавса пăхрĕ. Çак вырăн Пăла шывĕ хĕрринче. Тавралла тăпра купаланă, канавсем чавнă. Хулана кĕмелли виçĕ алăк пулнă. Ку вырăн, паллах ĕнтĕ, тăшмансем тапăнсан пытанма, тапăнакан тăшмана хирĕç çапăçма юрăхлă вырăн пулнă.

Экспедици 900 тăваткал метр таран çĕр чавса пăхрĕ. Тупăннă япаласене пăхса тухсан çакă паларчĕ: Тикеш патĕнчи хула вырăнне X ĕмĕрте тунă, унта çынсем X—XII ĕмĕрсенче, кунти халăхсене монголсем пусмăрласа иличченхи вăхăтра пурăннă.

Хула вырăнĕнче тупăннă япаласем çакăн пек вывод тума май параççĕ: кунта пăлхарсем пурăннă. Тăпра купаласа тунă крепоçе пăлхарсен феодалĕсенчен пĕри туртарнă пулмалла, вăл хулари çынсене те, таврара пурăнакансене те хăйне пăхăнтарса, хăйне валли ĕçлеттерсе тăнă. Тикеш патĕнчи хула вырăнĕ пĕтĕмпех вăтам ĕмĕрсенчи феодалсен çурчĕсем пек.

Вăл вăхăтра таврара пурăннă çынсем тырă акса тунă, выльăх-чĕрлĕх усранă (акапуç тимĕрĕн ванчăкĕ, çава татăкĕ, ал арман чулĕ, выльăх шăммисем нумай тупăннă). Пулă тытмалли хатĕрсен шлашкисем те сыхланса юлнă. Хулари пĕр пӳртре тимĕртен шăратса япаласем тăвакан çын пурăннă. Çак пӳртре йăмака, тимĕр тата тимĕр тăпри çунăкĕн юлашкисем юлнă. Кунтах пăхăр чăмăрки тата тараса йĕппи тупăннă. Çапла ĕнтĕ алăсти ĕçĕпе пурăннă çын хăйне кирлĕ япаласене сутăн илнĕ пулмалла. Виçĕ тараса пуканĕ тата шурă тăмран тунă савăт-сапа тупăнни те кунти çынсем суту-илӳ туни çинчен калаççĕ.

XII ĕмĕрте хула варринче пуралаа тунă пысăк çурт ларнă. Унăн урайне хăма сарса тунă. Кăмаки кĕтесре пулнă, — чăваш пӳрчĕсенче кăмакасене яланах çавăн пек кĕтесре тăваççĕ.

Çак хула пек вырăнтан çынсем хăçан тата мĕн сăлтавпа пăрахса кайнине пĕлме май çук.

Тикеш ялĕ патĕнчи X—XII ĕмĕрсенчи хула вырăнĕ пысăк. Халĕ унăн пĕчĕк пайне çеç чавса пăхнă. Малашне чавса пăхсан, кунта истори наукишĕн хаклă япаласем татах тупăнĕç.

Г. А. ФЕДОРОВ-ДАВЫДОВ.
Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан университет аспиранчĕ.

Тавăт ялĕ патĕнче

Экспедицин 2-мĕш отрячĕ ĕçĕ Элĕк районĕнчи Тавăт ялĕ патĕнче пуçланчĕ. Кунта хăйăр чавнă чухне авалхи çынсенĕ пытарнă вырăн тухнă. Унта тăм чӳлмексем, чул мăлатук тата ытти япаласем те тупнă.

Чӳлмексен формисене, вĕсем çинчи йĕрсене тата чул пуртă-мăлатуксене пăхсан, çав вырăнта Фатьяновски культура текен вăхăтри, урăхла каласан, хальхи эрăчченхи III пинçуллăх вĕçĕнче пурăннă çынсене пытарни курăнать.

Кунта пысăк канав пулнă. Канавне сăнаса пăхнă чухне çын шăмми татăкĕсем тата савăт-сапа ванчăкĕсем тупăнчĕç. Кунсăр пуçне, канавра 2 чул вăл тата пут чулĕнчен тунă çĕçĕ тупрăмăр.

Унтан, чавса пăхма тытăнсан, 60 сантиметр тарăнăшĕнче, çын ӳтне пытарнă вырăн пурри паларчĕ. Кунта икĕ пуç шăмми, вĕсем хушшинче бронзăран тунă япаласем тупнă. Пытарнă çын хăйхăйн, урисене хуçлатса вырттнă, ун таврa савăт-сапа юлашкисем нумай. Вара çакă паллă пулчĕ: кунта чăнах та Фатьяновски культура текен вăхăтри çынсене пытарнă пулнă, анчах çак вырăнах каярахпа урăх çынна пытарнă.

Каярахха пытарни хĕрарăм пулнă. Ăна мосргле, пуçне çурçĕр еннелле хурса пытарнă. Шăммисем çĕрсе пĕтнĕ, пуç вĕçĕнче чашăк пек савăт ларать. Ĕнси çинче бронза пластинка çине тĕрлесе тунă çаврашка пур. Çав хĕрарăм сумĕнчех бронза пралукран тунă хăлха çакки (вĕçĕнче пĕчĕк чăмăрлă), шăрçасем, шăрçа ярăмĕсем, кăкăрĕ çинче бронзăран тунă (ĕнси çинче пулнинчен пысăкрах) çаврашка тата пурни çинче бронза пралука пĕтĕрсе тунă çĕрĕ тупăнчĕç. Пилĕкне çыхнă чĕн пиçĕххи çинче те бронзăран тунă пĕчĕк спиральсем тулнех пулнă.

Тавăт ялĕ патĕнче чавса пăхнă чухне, тупнă япаласем наукăшăн питĕ интереслĕ. Махарахах каларăмăр, çав япаласенчен хăшĕ-пĕрисем хальхи эрăчченхи III пинçуллăх вĕçĕнче (Фатьяновски культура вăхăтĕнче) пурăннă çынсенчен юлнă. Çав вăхăтран юлнă япаласене Чăваш республикинчи чылай вырăнсенче тупнă. Куславкка районĕнчи Паланкасси патĕнчи авалхи масар вырăнĕнче чавса кăларнă япаласем, савăт-сапа çинчи тĕрĕсем Тавăт ялĕ патĕнче тупнă япаласемпе пĕр пекех. Вĕсем пирĕн эрăчченхи III пинçуллăхра хальхи Чăваш республикин çĕрĕ çинче мĕнле ăрусем пурăннине пĕлме май параççĕ.

Тавăт ялĕ патĕнче тупнă шăрçасем (кантăкран тунă, ылтăн тĕслĕ шăрçасем) Европăн хĕвелтухăç пайĕнче хальхи эрăн I пинçуллăхĕн малтанхи пайĕнче пурăннă çынсенчен юлнă памятниксенче тĕл пулаççĕ. Çав вăхăтра Атăлпа Ока хушшинче вырăнсенче пурăннă ăрусенчи çынсем тумтире хитрелетме бронзăран тунă çаврашкасем çакса çӳренĕ, бронзăран тунă пĕчĕк чăмăр вĕçлĕ хăлха çаккисем те I пинçуллăх варринче пурăннă çынсен пулнă. Çапла ĕнтĕ, Тавăт ялĕ патĕнче çав хĕрарăма хальхи эрăн II—VI ĕмĕрĕсенче пытарнă пулмалла.

Çынсен ӳчĕсене пытарнă вырăнта тупăнакан япаласем çынсем пурăннă вырăнсенче те тупăнаççĕ. Çакăн пек вывод тума пулать: хальхи эрăн малтанхи ĕмĕрĕсенче хальхи Чăваш республикин çĕрĕ çинче çав вăхăтра хальхи Горький облаçĕнче, Саратов патĕнчи Атăл тăрăхĕнче, Пенза тата Тамбов çывăхĕнчи вырăнсенче пурăннă ăрусемпе çывăх тăнă ăрусем пурăннă.

Иртнĕ çулсенче тĕпчев ĕçĕсене туса пынă чухне чылай çынсен хальхи Чăваш республикин çĕрĕ çинче I пинçуллăхра пурăннă çынсенчен юлнă япаласемпе çав япаласен çинчи тĕрĕсем кунта каярахха пурăннă çынсенчен юлнă япаласемпе пĕр пек, тесе асăрхаттарнă. Эпĕ Апаш, Тавăнкасси патĕнчи тата ытти вырăнсенчи авалхи масарсенчен кăларнă бронзăран тунă хитре япаласем çинчен калатăп. Ку тĕлĕшпе Тавăт патĕнче пытарнă хĕрарăм пурри çинче пулнă çĕрĕ питĕ интереслĕ. Вăл хальхи эрăн I пинçуллăхра пурăннă ăрусен вырăнти культури тарăн тымар яни çинчен калать. Авалхи çынсем пурăннă вырăнсенче тупнă япаласем çав шухăша çирĕплетеççĕ.

Тавăт ялĕ патĕнче авалхи çынсене пытарнă вырăнпа юнашарах, тăвайккинче авалхи çынсем пурăннă ял пулнă. Унта питĕ ĕлĕк-авал тата хальхи эрăн IX—XII ĕмĕрĕсенче—Пăлхар государстви вăхăтĕнче—çынсем пурăннă. Кунта IX—XII ĕмĕрсенче пурăннă çынсен çĕр пӳрчĕсен юлашкисем, савăт-сапа ванчăкĕсем юлнă. Ку вырăнта нумаях пулмасть иртнĕ вăхăтра та çынсем пурăннă пулмалла,—тăпран çиелти сийĕ айĕнче XIX ĕмĕрти укçасемпе япаласем те тупăнчĕç.

Тавăт ялĕ патĕнче ĕлĕк-авал çынсене пытарнă вырăнсенчи тĕмескесем нумай. Экспедици пĕр тĕмескене чавса пăхрĕ. Вăл Фатьяновски культура текен вăхăтри çынсене пытарнă вырăн пулнă.

Унтан экспедици ытти ялсем патĕнче те çынсем пурăннă вырăнсене пăхрĕ. Эпир кунта Красноармейски районĕнчи Тусай патĕнчи авалхи çынсем пурăннă вырăн çинчен кĕскен калăпăр. Ял çыннисем ку вырăна Хула-ту теççĕ. Кунта пурăннă çынсем тăпра купаласа тата канав чавса тăшмансенчен сыхланмалли вырăн тунă. Савăт-çапа ванчăкĕсене пăхсан, çак вырăнта хальхи эрăн I пинçуллăхĕнче те çынсем пурăнни курăнать. Çывăхра та çынсем пурăннă вырăнсем чылай пулнă.

Чăваш республики территорийĕнче ĕлĕк-авалхи çынсен пурнăçĕ мĕнле пулнине пĕлме пулăшакан япаласем нумай тупăнаççĕ. Вĕсене малашне те пухса пымалла.

Н. В. ТРУБНИКОВА.
Истори наукисен кандидачĕ, Мускаври музейăн аслă научнăй сотрудникĕ.

Ӳкерчĕксем çинче: археологи экспедицийĕ Тавăт ялĕ патĕнче тупнă авалхи япаласем. Сулахайра—бронзăран тунă çаврашкасем, çĕрĕ. Сылтăмра—тăм чӳлмексем тата чул мăлатук.

Г. Зиньков фотоӳкерчĕкĕсем.

Кĕрхи çĕртме—вăйлă тырпул никĕсĕ

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли тĕп ĕçсенчен пĕри вăл тăпрана кăпкалатса çемçетесси пулать. Пусă çаврăнăшĕнчи кашни уйăн, акса тăвакан кашни культурăн уйрăмлăхне шута илсе, çĕре тĕрлĕ майсемпе тата тĕрлĕ вăхăтра кăпкалатмалла.

Суртрисем акмалли лаптăксене çапла кăпкалатса çемçетмелле: кĕркунне уйхирте тырпул пухса кĕртнĕ хыççăн кĕрхи çĕртме тумалла, çуркунне, суртрисем акиччен, тепĕр хут культиваци туса кăпкалатмалла. Кĕрхи тырă акмалли уйсене çуллахи тапхăрта кăпкалатса тăмалла.

Çитес çул суртрисем акмалли лаптăксене вăхăтра кĕрхи çĕртме сухи туса хăварни вăйлă тырпул никĕсĕ пулса тăрать. Кĕрхи çĕртме агротехника енчен акă мĕншĕн усăллă: вăл сумкурăксене пĕтерме, нӳре ытларах тытса хăварма пулăшать. Çавăн пекех тăпрари туталăхлă япаласем те нумайланаççĕ. Кĕрхи çĕртме ялхуçалăх культурисене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене те пĕтерет.

Наука учрежденийĕсем тата малта пыракан колхозсем нумай çулсем хушши сăнаса пăхни çакна кăтартса парать: кĕрхи çĕртме тунă лаптăк çине акнă çурхи тулă тухăçлăхĕ çуркунне сухаласа акнинчен 40—50 процент пысăкрах пулать.

Хăмăла сухаласа, пăрахни тата кĕрхи çĕртме тунине сумкурăкне пĕтермелли чи лайăх май пулса тăрать. Мосолов академик кăтартса панă тăрăх, çуркунне сухаласа акнă сĕлĕ çинче кашни гектарта 810 пин сумкурăк, кĕрхи çĕртме тунă хыççăн акнă лаптăк çинче 412-пин сумкурăк пулнă. Кĕрхи çĕртме туни сумкурăка сурри ытла пĕтерет, çĕрĕç культурăпе ӳстерме пулăшать.

Пирĕн республикăра малта пыракан колхозсенче кĕрхи çĕртмене пысăк хака хураççĕ, унпа пусă çаврăнăшĕнче анлă усă курса, çулленех пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтереççĕ. Сăмахран, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоза илер. Кунта темиçе çул хушши, ялхуçалăх культурисене кĕрхи çĕртме тунă лаптăксем çине акаççĕ. Кĕрхи çĕртмене колхоз сентябрь уйăхĕнчен кая юмасăр туса ирттерет, çĕре 27—30 сантиметр тарăнăш предплужниклă плугсемпе сухалать.

1955 çулта колхозра ĕçлекен трактор бригади кĕрхи çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарнă. Кĕрхи çĕртме тунă хыççăн акакан тĕштырă культурисем колхозра тухăçлă пулаççĕ. Сăмахран, 1952 çулта кашни гектартан 23,75 центнер, 1953 çулта—19,12 центнер çурхи тулă пухса кĕртнĕ. Çĕрĕçне агротехника вĕрентнĕ пек лайăх срокра, пахa туса пынă май «Гвардеец» колхоз ĕçченĕсем кăçал та тухăçлă тырпул пухса кĕртеççĕ.

Красноармейски районĕнчи «Герой» колхозра та çуртрисем акмалли пĕтĕм лаптăк çинче кĕрхи çĕртме сухи тăваççĕ. Çавна пула, юлашки çулсенче артель тĕштырăсен тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерчĕ.

Кĕрхи çĕртме сухине Вăрмар районĕнчи колхозсенче те вăхăтра тума тăрăшаççĕ. Çак районти «Дружба» колхозра, сăмахран, суртрисем акмалли пĕтĕм лаптăка сухалаççĕ. Тырпул тухăçлăхĕ кунта кашни çулах ӳссе пырать.

Илсе кăтартнă тĕслĕхсем кĕрхи çĕртме тырпул тухăçлăхне ӳстермелли никĕс пулнине кăтартса параççĕ. Апла пулин те, хăшпĕр МТС-семпе колхозсенче кĕрхи çĕртмене тивĕçлĕ вырăна хумаççĕ, ăна вăхăтра туса ирттермеççĕ. Етĕрне районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозра, тĕслĕхрен, иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме сухи туса хăварман. Кĕрхи çĕртме тумалли плана республикăри колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, 1955 çулта 74,9 процент çеç тултарнă.

Кăçал кашни МТС-па колхозрах кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле. Çакна асра тытмалла: кĕрхи çĕртме сухиччен малтан хăмăл сухаласа пăрахмалла. Çĕртме сухине вара предплужниклă плугсемпе тумалла.

Хăмăла сухалани сумкурăксене пĕтерме пулăшать. Çавăнпа хăмăла тырпула пухса кĕртнĕ хыççăнах сухаласа пăрахмалла. Çапла туни тăпрари нӳрĕлĕхе ытларах сыхласа хăварма май парать. Кассă айне пулнă сумкурăк вăррисем нӳрĕ тăпра çинче часрах шăтса тухаççĕ. Кунсăр пуçне, нӳрĕ тăпрана сухалама лайăхрах, вăл кăпкарах пулса юлать. Хăмăла лущильниксемпе, 5—6 сантиметр тарăнăш сухаламалла.

Хăмăла мĕншĕн тарăн сухаламалла мар-ха? Мĕншĕн тесен 5—6 сантиметр тарăнăшĕнчи сумкурăк вăррисем хăвăрт шăтса тухаççĕ, кайран, кĕрхи çĕртме тунă чухне вĕсене пĕтерме лайăхрах. Тата хăмăла сухаланă хыççăн тăпран аялăрахри сийĕнче нӳрĕ ытларах сыхланать. Хăмăла сухаланă хыççăн кăпкаланса юлнă çиелти сий витĕр нӳрĕ ытларах сĕрăхать. Çапла вара хăмăла сӳрелени тăпрари сывлăш тата шыв режимне тĕрĕс тытма, биологи процесĕсене хăвăртлатма май парать. Хăмăл тăпра айĕнче часрах çĕрет, ирĕлекен туталăхлă япаласем ытларах пулаççĕ. Анчах, шел пулин те, республикăри колхозсенче хăмăл сухалас ĕç анлăн сарăлман-ха.

Хăмăла сухаласа пăрахнă хыççăн икĕ-виçĕ эрнерен кĕрхи çĕртме тумалла. Çĕре предплужниклă плугсемпе сухаламалла. Предплужникпе усă курнипе пула тăпран çиелти сийĕ касă айне пулать. 20—30 сантиметр тарăнăшне пулнă сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем, кислород çитменнипе аптраса, вилеççĕ. Кĕрхи çĕртме тунă чухне хăмăл сухаланă хыççăн шăтнă сумкурăк та пĕтет.

Кĕрхи çĕртмене мĕн тарăнăш сухаламаллине палăртнă чухне тăпра уйрăмлăхне тата çак лаптăк çине мĕнле культура акма йышăннине шута илмелле. Тĕштырă акмалли лаптăксене 20—22 сантиметр, техникăлла культурăсем, пахча çимĕç тата тымарçимĕç акмалли лаптăксене 25—27 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар сухаламалла.

Кĕрхи çĕртме туни сурхи уй-хир ĕçĕсене ирттерме чылай çăмăллатать.

Ялхуçалăх науки тата малта пыракан колхозсен опычĕ кăтартнă тăрăх, август тата сентябрь уйăхĕсенче тунă кĕрхи çĕртме кайран юлса тунă çĕртмерен, уйрăмах çуркунне сухаланинчен чылай усăллăрах.

Горький облаçĕнчи Симбилеевски опытлă станцире темиçе çул хушши сăнаса пăхнă хыççăн çакă курăннă: çуркунне сухаласа акнă хыççăн кашни гектартан 15,9 центнер, кая юлса кĕрхи çĕртме тунă лаптăксенче—16,5 центнер, малтан хăмăл сухаланă, анчах кĕрхи çĕртмене каярах юлса тунă лаптăксенче—19,6 центнер, кĕрхи çĕртме иртерех тунă лаптăксенче—20,0 центнер тырă тухнă.

Кĕрхи çĕртмене иртерех сухаласине пĕрлех ĕçе пахарах тума тăрăшмалла. Тăпран çиелти сийĕ сумăр шывĕпе тата сурхи шывпа юхса ан кайтăр тесе, тайăмлă вырăнсенче çĕре урлă май сухаламалла.

Кĕрхи çĕртме сухи тунă чухне Т. С. Мальцев меслечĕпе ытларах усă куриалла. Иртнĕ çулсенче Вăрмар районĕнчи колхозсенче Мальцев меслечĕпе усă курнă. «Дружба», «Победа» тата ытти хăшпĕр колхозсенче тунă опытсем кăтартнă тăрăх, çак меслетпе кăпкалатнă лаптăксем çинче тырпула тухăçлăхĕ чылай ӳснĕ.

Кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата лайăх ирттерни, уй-хире удобренисемпе ытларах çемçетни колхозсене тухăçлă тырпул туса илме май парать.

Доцент Т. КРУЖИЛИН.

Силос ытлăн-çитлĕн пулать

Сĕнтĕр районĕнчи «Коммунизм» колхоз председателĕ А. КОШКИН юлташ каласа пани

Кăçал çанталăк условийĕсем начартарах пулнă пирки колхоз утă-улăм пĕлтĕрхинчен сахалтарах туса илет. Çавăнпа та эпир обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçре ытти майсемпе туллин усă курма тăрăшатпăр.

Пирĕн артель членĕсем çакăн пек задача лартрĕç: кăçал 900 тоннăран кая мар пахa силос хатĕрлемелле. Силос мĕн чухлĕ кирлине палăртнă чухне çакăн пек расчет тунă: кашни сăвакан ĕне пуçне 7-шер тонна, кашни тĕп ана сысна пуçне 4-шар тонна хывмалла. Кунсăр пуçне ытти выльăх-чĕрлĕхе тăрантарма кирлине те шута илнĕ. Çакна пурнăçлама пирĕн условисем çителĕклĕ. Колхоз пусă çаврăнăшне пĕтĕмпе 46 гектар кукуруза акнă. Вăл лайăх çитĕнчĕ, çулĕшĕ метр-метр çурă пулмалла. Вăтам шутпа гектартан 150 центнертан кая мар тухать. Çитес кунсенче çуласа пуçтарса пĕтĕм кукурузăна шăтăксемпе траншейăсене хыватпăр. Колхоз кăçал кукуруза силосĕ пĕлтĕрхинчен виçĕ хут ытларах хатĕрлет. Силос хатĕрленĕ çĕрте çĕрулми аврине те анлăн усă куратпăр. Кăçал çĕртме уйне çĕрулми 12 гектар лартнăччĕ. Унăн аврине пĕтĕмпех силоса хывăпăр. Çĕрулми татах 55 гектар пур. Çак лаптăкри çĕрулми аврине те пĕтĕмпех силос тунă çĕре яратпăр.

Çакăн чухлĕ силос хывма колхозăн нумай вăхăтлăха пыракан силос сооруженийĕсем ситмеççĕ. Çавăнпа та эпир Вăрнар районĕнчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан колхоз опычĕпе анлăн усă куратпăр, силоса ахаль траншейăсене нумай хыватпăр.

Кăçал пирĕн выльăх-чĕрлĕх валли силос ытлăн-çитлĕнех пулать.

Махоркăран—пысăк тупăш

ЯЕПРЕÇ. «Путиловка» колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă махорка çитĕнтерет. Иртнĕ çулта 25 гектар çинче кашни гектартан 23-шер центнер махорка туса 107 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Кăçал колхоз кашни гектартан 25—30-шар центнер махорка туса илме обязательство йышăннă. Çак отрасльрен 150 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă.

Колхозра махорка çитĕнтерме уйрăм бригада тунă. Унта 55 колхозник. Вĕсем икĕ звенора ĕçлеççĕ. Звеносенчи кашни çынна 0,40—0,50 гектар уйрăм лаптăк çирĕплетсе панă.

Махорка калчи çитĕнтерме 0,50 гектар уйăрса уйрăм участок тунă. Махорка калчисене куçарса лартас умăн лаптăксене лайăх кăпкалатса хатĕрлеççĕ, кашни гектар çине пĕр центнер хаорлă калие икĕ центнер суперфосфат сапаççĕ. Калчасене куçарса лартсан азотлă удобренипе апат параççĕ.

Кăçал малтанхи вăхăтра уяр çанталăк тăнă пирки махорка çитĕнтерес ĕçре чылай йывăрлăхсем пулчĕç. Анчах колхозниксем йывăрлăхсенчен хăраманрĕç. Вĕсем иртен пуçласа каçчен уйран татăлмарĕç, калчасене шăварса тăчĕç, сумкурăксене ӳсме памарĕç. Ретсем хушшине виçĕ хутчен кăпкалатнă, хунав туратсене иртнĕ, чечексене татса тăнă. Вăл хурса ĕçлени çак кайнарĕ—колхоз хирĕнче кăçал нихçанхинчен те тухăçлăрах махорка çитĕнет.

— Махорка кашни гектартан 25 центнертан кая мар, уйрăм вырăнсенче 35—40 центнер тухать,—теççĕ махорка ăстисем.—Государствăна пĕтĕмпех пĕрремĕш сортлă продукци паратпăр.

Махорка туса илес ĕçпе М. Трофимов юлташăн звени хастарлă ĕçлет.

Н. КУДРЯВЦЕВ.

Финлянди халăхĕ Совет государствин пуçлăхне саламлать

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Финляндие пыни çинчен унти хаçатсем нумай çыраççĕ.

Хельсинкири хаçатсем К. Е. Ворошилов пыни Финляндипе Совет Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусене малалла вăйлатас ĕçре пысăк вырăн йышăнинне палăртаççĕ. «Ҫаупалехти» хаçат çапла çырать: Финляндипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне шанса пурăнмалли политика тытса пыраççĕ. К. Е. Ворошилов пирĕн çĕршыва килни çак политика çирĕпленнине çыхăнса тăрать.

Ҫакна ăна, тесе çырать хаçат, Финлянди халăхĕн мĕнпур сийĕсем пысăк хавасла хураççĕ. Ăна пирĕн хисеплĕ хăна уççăн куртăр тесе эпир пурсăмăр та тăрăшатпăр. К. Е. Ворошилова эпир: «Ыра сунса кĕтетпĕр», тесе калатпăр.

«Ню тид» хаçат çапла çырать: хисеплĕ хăна пирĕн çĕршыва килнине эпир чăн чунран саламлатпăр, мĕншĕн тесен вăл килни хĕвелтухăçĕнчи аслă кӳршĕпе пирĕн хушăри çыхăнусем вăрçă хыççăнхи вăхăтра лайăх енпелле улшăннине кăтартса парать.

Эпир пĕлетпĕр, тенĕ хаçатра, çак атлану пирĕн çĕршывшăн лайăх пулчĕ. Халĕ Совет Союзĕ пирĕнпе суту-илӳ тăвакан тĕп çĕршывсенчен пĕри пулса тăчĕ. Ҫакă вăл пирĕн çĕршыври ĕççыннисене ĕç тупса пама питĕ нумай пулăшрĕ. Паллă ĕнтĕ, çак суту-илӳ пирĕн çĕршыва усă кӳрет.

Ку тĕлĕшпе илсен, пирĕн хушăри суту-илӳ аслă çĕршывпа пĕчĕк çĕршывсем хушшинчи çыхăнусем мĕнле пулмаллине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем тĕрлĕ политикăллă системăллă çĕршывсем культура тата экономика тĕлĕшĕнчен тачă çыхăнса ĕçлеме пултарнине, çапла ĕçлесе пурăнни икĕ енне те усă кӳнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса парать.

Эпир, тесе çырать юлашкинчен хаçат, çакна шанса тăратпăр: К. Е. Ворошилов пирĕн çĕршыва килни пирĕн çĕршывсем хушшинчи лайăх çыхăнусене малалла çирĕплетме пулăшĕ.

«Илкка» хаçат уйстатьинче çапла каланă: «Ҫулталăк каялла тунă килĕшӳсем тăрăх эпир Порккала территорийĕпе çĕнĕрен усă курма тытăнтăмăр. Ҫак килĕшӳсемшĕн эпир Совет Союзĕн пуçлăхне хамăрăн çĕршывра хĕрӳллĕн тав тăвăпăр».

Республикăн халичченхи президенчĕ тытса пынă, унăн хальхи президенчĕ тытса пыракан тулашри политикăна пула Финлянди Порккала-Удд территорине срокчченех каялла илчĕ. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Финляндие килни, тесе çырать хаçат, Финляндипе унăн хĕвелтухăç енчи кӳршин халĕ те çавăн пек политика тытса пынине кăтартса парать.

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференци

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Августăн 18-мĕшĕнче Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки пухнă конференцин тăваттăмĕш ларăвĕ пулнă. Ларура Австрали, Цейлон, Голланди, Эфиопи, Пакистан тата Англи представителĕсем тухса каланă.

Великобритани ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Селвин Ллойд хăйĕн малтанхи шухăшĕсенех çĕнĕрен каланă, канал тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе «тĕнчери çĕршывсен системи» пулăшнипе кăна гарантилеме май пулас пек кăтартма тăрăшнă. Даллес формăласа панă принципсене Англи правительстви йышăнать, вĕсене ырлать, тенĕ вăл.

Конференци «тĕп принципсем» палăртса хатĕрлетĕр, вĕсене Египета сĕнтĕр, тенĕ Ллойд. Вăл Египет правительстви августăн 12-мĕшĕнче каланă пек Суэц каналĕ пирки государствăсен конференцине пуххасси çинчен СССР делегацийĕн пуçлăхĕ Д. Т. Шепилов панă сĕнĕве хирĕç каланă.

Вырсарникун перерыв тунă хыççăн паян Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки пухнă конференци участникĕсем Ланкастер-хауз çуртĕнче хăйсен черетлĕ, пиллĕкмĕш ларăвне пухăннă.

Дискусси Инди делегацийĕн пуçлăхĕ Кришна Менон пуçланă.

Суэц каналĕ тăрăх суднăсем йĕркеллĕ çӳреççĕ

КАИР, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Египет правительстви Суэц каналне аслăлатмалли тата тарăнлатмалли плансем тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлет.

Суэц каналне реконструкцилесси çинчен тăракан ыйтăва ĕнер Насер президент патĕнче канал правленийĕн директорĕпе Махмуд Юнеспа пĕрле сӳтсе явнă. Канал çинчен тăракан ыйтăва ĕнер çавăн пекех Насер президентпа суту-илӳ министрĕ Абу Нусейр сӳтсе явнă.

Хаçатсенче канал тăрăх суднăсем çӳренине кăтартакан сводка пичетлесе кăларнă. Вăл канал тăрăх суднăсем çӳретес ĕç йĕркеллĕ пынине кăтартса парать.

Июлĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа августăн 19-мĕшне çитиччен канал тăрăх 1.019 судно тухса кайнă. Ҫав шутра Англин 256 карапĕ пулнă.

Суэц каналĕн правленийĕ çĕнĕрен виçĕ лоцман улăрса лартнă. Правлени пичетлесе кăларнă заявленире сотрудникĕсемпе рабочисене çĕнĕрен çапла шантарса каланă: вĕсен ĕç условийĕсемпе ĕç укçи халиччен хи пекех пулать, çавăн пекех вĕсене премисем параççĕ, хушса тӳлеççĕ. Правлени лайăх работниксене пурлăх енĕпе хавхалантарасси çинчен пĕлтернĕ.

ЯПОНИПЕ КИТАЙ ХУШШИНЧЕ ТĂТĂШАХ ПАРАХУТСЕМ ÇӲРЕÇÇĔ

ПЕКИН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Японири «Ямасита Кисэн» компанийĕ Японипе Китай хушшинче тăтăшах парахутсем çӳретме йышăннă.

Хĕвеланăç Германири террор

БЕРЛИН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германи юстицийĕн демократие хирĕçле ĕçĕ пирки тĕнчери мĕнпур çĕршывсенче, Германии мĕнпур кĕтесĕсенче протест тăваççĕ. Ҫак вăхăтра Федеративлă Германи Республикинчи полици машини пĕтĕм вăйпа ĕçлет.

Баварире Коммунистсен партийĕпе пĕрлех массăллă демократилле организацисене хĕсĕрлеççĕ. Сăмахран, Мюнхенра полици чиновникĕсен строительсен профсоюзĕн çамрăксен организацийĕн кассине конфискациленĕ. Нюрнбергра полици нацизм вăхăтĕнче влаçсем хĕсĕрленĕ çынсен пĕрлешĕвне хирĕçле мерăсем йышăннă. Полици отрячĕ çак организаци çуртне сĕмĕрсе кĕнĕ те ăна пичетлесе илнĕ. Берлинра хĕрарăмсен демократилле союзĕн вырăнти организацийĕн çуртне тапăннă.

Аугсбургра, Фюртра, Ней-Ульмра, Вейсенхорнра тата ытти хуласенче коммунистсене хирĕç террорла ĕçсем тăваççĕ. Хваттерсене ухтарнă чухне вĕсен хуçисем килте пулман пулсан, полицейскисем алăксене сĕмĕрсе кĕнĕ. Ялавсене, рабочисен юхăмĕн руководителĕсен портречĕсене, марксистла литературăна конфискациленĕ.

БОНН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германири хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă хыççăн Анат Саксонипе Ҫурçĕр Рейн-Вестфали çĕрĕсенче парти литературине, Коммунистсен партийĕн документĕсемпе пурлăхне конфискацилес шутпа нии ухтару ытла тунă. Ухтарусем вăхăтĕнче 32 çынна арестленĕ.

Анат Саксони çĕрĕнче арестленĕ çынсем хушшинче çак çĕр ландтагĕн депутачĕ, Коммунистсен партийĕн членĕ Ишерпе те пур. Калас пулать, Анат Саксони çĕрĕн законĕсем тăрăх ландтаг депутачĕсен прависем вĕсен партине ĕçлеме чарнă хыççăн та сыхланса юлаççĕ. «Зюддейче цейтунг» хаçат çапла çырать: Анат Саксони çĕрĕн ландтагĕ Германири Коммунистсен партийĕн ландтагри представителĕсен депутат прависем çинчен ятарласах решени йышăнма тивĕçлĕ.

«Франкфуртер альгемейне» хаçат Штутгартран пĕлтернĕ тăрăх, Вюртемберг-Баден çĕрĕн шалти ĕçсен министрĕ çапла каланă: çак çĕр çинчи законсем тăрăх вырăнти самоуправлени органĕсене халăх суйланă коммунистсене депутат мандачĕсемсĕр тăратса хăварма юрамасть. Ҫурçĕр Рейн-Вестфали çĕрĕнчи законсем тăрăх, Германири Коммунистсен партийĕн членĕсене 300 çынна ытла депутат мандачĕсемсĕр тăратса хăвараççĕ.

Хĕвеланăç Германири полицин киревсĕр ĕçĕсем

БОНН, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Кельнише рундшау» хаçат çапла пĕлтерет: Ҫурçĕр Рейн-Вестфали çĕрĕнче полици Германири Коммунистсен партийĕн материалĕсемпе пурлăхне конфискацилес тĕлĕшпе 712 ухтару туса ирттернĕ. Германири Коммунистсен партийĕн 312 членне, влаçăн вырăнти органĕсен представителĕсем пулса тăракан çынсене, депутат мандачĕсемсĕр тăратса хăварнă.

«Вестфалише рундшау» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Ҫурçĕр Рейн-Вестфали çĕрĕнче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин тата «Социальнăй ĕç» организацийĕн активисчĕсене суд тума хатĕрлеççĕ.

Иден патне Гарри Поллит янă çыру

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Англири Коммунистсен партийĕн председателĕ Гарри Поллит премьер-министр Иден патне çыру янă, Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă пирки Федеративлă Германи Республикин правительствине асăрхаттарса калама ыйтнă.

Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă пирки Гарри Поллит çапла çырать: «Ҫак ĕç Англи халăхне хытă пăшăрхантарать. Гитлеровецсем хăйсен стройĕн малтанхи кунĕсенче шăпах çакнашкал ĕçсем туни-не, унтан вара Германири мĕнпур демократи вăйĕсене хирĕçле ĕçсем тунипе Англи гражданĕсем нумайăшĕ лайăх астăваççĕ.

Ҫакнашкал ĕç Хĕвеланăç Германири демократи аталанăвне, Германие пĕрлештересс ĕçе, пĕтĕм тĕнчери мире сиен кӳме пултарать».

Демонстрантсемпе полици хушшинчи тытăçу

ДАМАСК, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Египетпа пĕр шухăшлă пулнипе кăтартма çак кунсенче Англи контроллесе тăракан Араб Эмирачĕн столицинче—Кувейт хулинче демонстраци туса ирттернĕ. Полицие демонстрантсем хушшинче вăйлă тытăçусем пулса иртнĕ.

Августăн 16-мĕшĕнче «Египета пулăшмалли куна» палла тума йышăннă пулнă. Августăн 15-мĕшĕнче влаçсем çак ĕçе пăрахăçлама требовани лартнă. Хулара пурăнакансем, влаçсен требованине хирĕç протестлесе демонстраци организациленĕ. Демонстраци хаярăн пусарса лартнă.

Влаçсем чарнă пулсан та, августăн 16-мĕшĕнче хула халăхĕ «Египета пулăшмалли куна» çĕнĕ демонстраци туса палăртнă. Демонстрантсене полици тапăннă, 7 çынна вĕлернĕ, 173 çынна амантнă.

КĂНТĂР КОРЕЙĂРА АМЕРИКА МОНОПОЛИЙĔСЕМ ХУÇАЛАНАÇÇĔ

ПХЕНЬЯН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Кăнтăр Корейăри агентствăсем çапла пĕлтереççĕ: Америкăн нефть кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен «Стандарт ойл компанийĕпе» «Калтекс ойл компани» Кăнтăр Корейăна нефть тăратас ĕçе хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Хăйсен влиянийĕпе усă курса, вĕсем лайăххăрах та лайăххăрах условисем илеççĕ. Августăн 17-мĕшĕнче çак компанисем Кăнтăр Корея правительстви умне çакăн пек требовани лартнă: пирĕн компанисен ĕçне нимĕнпе те чăрмантармалла мар, Кăнтăр Корейăна нефть тăратас ĕçе пĕтĕмпех хăйсен аллине паракан закона хăвартрăх пурнăçламалла, тенĕ.

Америка монополийĕсем хуçаланса пурăнни Кăнтăр Корей экономикине пысăк сиен кӳрет. «Корея банкĕн бюллетенĕнче» пичетленесе тухнă статьяра çапла каланă: Америка компанийĕсем, нефть хакне ӳстерес тесе, хăш чухне нефть сутма чарăнаççĕ. Ҫакă вăл Кăнтăр Корея промышленноçне транспортне йывăрлăха кĕртсе ӳкерет.

Ишлей МТС-ĕнчи комбайнерсен ăмăртăвĕнче чи ăста механизаторсенчен пĕри—Иван Михайлович Кудряшов юлташ малта пырать. Паянхи куна вăл 250 гектар çинчи тырпула пĕр тăкаксăр вырса çапса панă.

Кудряшов юлташ, социализмла ăмăртăва хутшăнса, кăçал 400 гектар çинчи тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртме сăмах панă. Ҫак кунсенче вăл сменăри нормăна ирттерсе тултарать—кулленех 12—16 гектар тырă вырать. Ĕçе ялавах пысăк ăсталăхпа тата тинтерлĕ тăвать. Машинăна тулли усă курать. Ҫавăнпа ĕнтĕ унăн комбайнĕ çинче хĕрлĕ флажок вĕлкĕшет. Халĕ вăл «Знамя коммунизма» колхоз уй-хирĕнче ĕçлет.

Ӳкерчĕк çинче: И. М. Кудряшов юлташ комбайн штурвалĕ умĕнче.

Г. Зиньков фотоӳкерчĕкĕ.

Рационализаторсен пухăвĕ

Ҫак кунсенче Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче рационализаторсемпе изобретательсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура главнăй инженер заместителĕ С. Федченко юлташ заводри рационализаторсемпе изобретательсен ĕçĕ çинчен доклад туса пачĕ.

1955 çулта заводра рационализаторсемпе изобретательсем пурĕ 304 çын пулнă. Вĕсем 699 рационализаторла сĕнӳ панă, 335 сĕнĕве пурнăçа кĕртнĕ. Ҫав сĕнӳсем завода çулталăкра 1.014 пин тенкĕ перекетлеме май параççĕ.

Тăваттăмĕш сборочнăй цехра çĕнĕ пуçарусене тата пахa сĕнӳсене яланах хапăл туса йышăнаççĕ. Цех плана уйăхран уйăха ирттерсе тултарать, продукци хăйне ларакан хакне йӳнетет.

Пĕрремĕш сборочнăй цех та паха тĕслĕхсем кăтартать.

Рационализаторсемпе изобретательсен валли ятарласа темник туса кăларнă. Темникре 106 пункт. Вăл пунктсенчен çуррине кăна пурнăçласан та завод нумай укçа перекетлесе хăварнă пулĕччĕ. Анчах çур çул хушшинче çак темникре асăннисенчен тăватă сĕнӳ анчах панă. Пухура тухса калакан юлташсем заводри профсоюз комитечĕ çумĕнчи рационализацине изобретени енĕпе ĕçлекен комисси хăйĕн пуçарулăхне кăтартманнине палăртрĕç.

П. СТЕПАНОВ.

Улатăртан килнĕ хыпарсем

ТУССЕН ÇЫХАНĂВĔ

Улатăрти махорка фабрикин коллективĕ, хулари ытти предприятисем пекех, пĕр уйăх каялла хăйĕн чылай производственникĕсене Алтай крайĕнчи халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсем çинчи пуян тырпула пухса кĕртме ăсатрĕ.

Алтая кайнă Жирнов, Вишняков, Шалунова, Максимов т. ыт. те çак кунсенче фабрикăна çыру ячĕç. Вĕсем хăйсем вырăна лайăх çитни, унта совхозра ĕçлени çинчен çыраççĕ. Малтанхи кунсенчех ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнă. Вĕсем махорка фабрики коллективне предприятие хăвăртрах юсаса срокчен ĕçе яма чĕнеççĕ.

Ҫамрăксен чĕнĕвĕ çине ответлесе, фабрика коллективĕ çакăн пек çыру ячĕ:

«Хаклă юлташсем! Эпир сирĕн пархатарлă ĕçпе чунтан савăнатпăр.

Фабрика коллективĕ юсав ĕçĕсене срокчен пĕтерме, фабрикăна августăн 28-мĕшĕнче ĕçе яма обязательство илчĕ. Августăн 11-мĕшĕнче Прокопенкопа Юматов слесарьсем паха пуçару турĕç. Вĕсем махорка туракан станока обязательствăра палăртниччен 5 кун маларах юсаса пĕтерчĕç. Халĕ вĕсен примерĕпе Зайцев, Гарев, Макаров, Нужин, Скрипин т. ыт. те оборудовани хăвăртрах юсассишĕн кĕрешеççĕ.

Дирекци, парторганизаци тата профсоюз комитечĕ сире çĕнĕ çитĕнӳсем тума сывлăх сунаççĕ».

МАЛТИ ВЫРĂНА ТУХАССИШĔН

Улатăрти юсавпа строительство кантурĕ (начальникĕ И. Кулешов юлташ) хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать. Кăçалхи çичĕ уйăх хушшинче, пĕлтĕрхи çак вăхăтпа танлаштарсан, юсавпа строительство ĕçĕсен калăпăшĕ 25 процент ӳснĕ, плана 10,8 процент ирттерсе тултарнă. Тунă ĕçсене лайăх хакпа йышăннă. Ĕç тухăçлăхĕ вăтам шутпа 34 процент хăпарнă, ĕçĕн хăйне ларакан хакĕ 5,2 процент йӳнелнĕ.

Кăçал «Пионер» йышши çĕклекен кран, растворомешалка туянни, вĕсене ĕçе янă. Халĕ хăма çурмалли рама вырнаçтарса лартаççĕ. Столярнăй мастерскойĕнче фрезер тата савалакан станоксем хутшăннă.

Рабочисем хушшинче ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн социализмла ăмăрту анлă сарăлнă. Ăмăртура Сутырин платник, Смирных каменщик, Сергиенко штукатурщик, Головенко маляр малта пыраççĕ. Вĕсем сменăри нормăна 30—60 процент ирттерсе тултараççĕ.

Коллектив тунă ӳсĕмсемпе лăпланса ларасть. Вăл мĕнпур майсемпе усă курса юсавпа строительство кантурĕсен коллективĕсен хушшинчи ăмăртура малти вырăна тухма тăрăшать.

ТАВАР ÇАВРĂНĂШ ПЛАННЕ ТУЛТАРНĂ

Пароходствăн Сăр агентствин ОРС-ĕ (начальникĕ П. Серпов юлташ) июль уйăхĕнчи тавар çаврăнăш планне 106 процент тултарчĕ. Малти вырăна 10-мĕш магазин (заведующийĕ Н. Зиновьев юлташ) тухрĕ. Вăл вăкăн сутмалли тавар çаврăнăш планне 147 процент тултарма пултарчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене промышленность таварĕсем сутакан 8-мĕшпе 3-мĕш магазинсем йышăнчĕç.

ОРС коллективĕ кăçалхи тавар çаврăнăш планне декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă.

Н. АННЕНКОВ.

Чăвашсен паллă композиторĕсен творчествине тĕпчесе вĕренесси

Чăвашсен профессилле музыкин никĕсне хывнă çынсен творчествине тĕпчесе вĕренес тата пичетлесе кăларас тĕлĕшпе республикăра чылай ĕçсем тунă ĕнтĕ. Анчах та ку ĕç халиччен çителĕксĕр пулса пынă. Хăшпĕр композиторсен архивĕсем ку таранччен уйрăм çынсен аллинче упранаççĕ. Вĕсене пухса тĕпчесе вĕренесси çине кирлĕ пек пăхман.

Чăваш совет композиторĕсен союзĕн правленийĕ, чĕлхе, литература, историпе экономика енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕ халĕ Ф. Павловăн, В. Воробьевăн, Г. Воробьевăн, С. Максимовăн, В. Кривоносовăн произведенийĕсене пухса упраса усрас, тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Максимов, Люблин, Кривоносов композиторсем пухнă чăваш халăх юррисене 1957 çулта кĕнеке туса кăларма палăртнă. Наукăпа тĕпчев институчĕ улттăмĕш пилĕкçуллăхра Ф. Павловăн сочиненийĕсене вырăсла тата чăвашла пичетлесе кăларма хатĕрленет. 1-мĕш томра—литература произведенийĕсем, 2-мĕш томра—музыка произведенийĕсем пулмалла.

США-ри металлурги промышленноçĕнчи рабочисен çĕнтерĕвĕ

Августăн 4-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен пĕрлештернĕ профсоюзĕнче тăракан 650 пин металлургăн 35 куна пынă забастовки вĕçленнĕ. Ҫакă вăл США-ри рабочисен вăрçă хыççăнхи вăхăтри чи пысăк забастовки пулнă.

Калас пулать, США-ри металлурги промышленноçĕнчи рабочисем хăйсен интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе стачкăсем туса кĕрешес ĕçре пысăк опыт пухнă. Хăйсен пĕтĕмĕшле пĕррмĕш забастовкине вĕсем 1919 çулта тунă. Ҫак забастовкăна ертсе пыраканĕсенчен пĕри США-ри Коммунистсен партийĕн хальхи вăхăтри председателĕ Уильям Фостер пулнă. Ку забастовка Америкăри рабочи юхăмĕн историйĕнчи паллă тапхăр пулса тăнă. 20 çул каялла, хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен профсоюзне туса хунă хыççăн кăштах вăхăт иртсен, çав профсоюз организацийĕ забастовкăна 200 пин çын хутшăннă. Предприятисен хуçисем рабочисене пусарса-лартас шутпа юнлă ĕçсем тума та именмен. Ҫав предпринимательсене хирĕç рабочисем хытă тăнă. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн металлурги промышленноçĕнчи рабочисем виçĕ хутчен: 1946 çулта—25 кун, 1949 çулта—пĕр уйăхран пуçласа уйăх çурă таран, 1952 çулта—54 кун хушши забастовка тунă. Иртнĕ çул вĕсем пĕр кунлăх забастовка туса ирттернĕ.

Металлург-рабочисен кăçалхи забастовки — вăрçă хыççăнхи пиллĕкмĕш забастовка, вăл унта хутшăннă çынсемшĕн кăна мар, США-ри пĕтĕм рабочи класшăн та пысăк вырăн йышăннă. Асра тытас пулать: Америка металлургĕсем вĕсем — унти рабочи класăн питĕ пысăк отрячĕ. США промышленноçĕн ытти нумай отраслĕсенчи профсоюзсемпе компанисем хушшинче пыракан калаçусен результачĕсем металлургсен забастовки мĕнпе вĕçленнинчен килет.

Хурçă шăратакансен забастовки июлĕн 1-мĕшĕ умĕн çĕрле, коллективлă килĕ договор срокĕ тухнă пирки çĕнĕ договор тăвасси çинчен профсоюзпа металлурги компанийĕсем хушшинчи калаçусем ăнăçсăр вĕçленнĕ хыççăн пуçланнă. Компанисен ячĕпе калаçусене хурçă предприятийĕсен виçĕ пысăк монополийĕн—«Юнайтед стейтс стил корпорейшн», «Бетлихем стил компани» тата «Рипаблик стил корпорейшн» представителĕсем хутшăннă. Ку монополисем США-ри металлурги промышленноçĕн пĕтĕм продукцийĕн 55 процентне парса тăраççĕ, вĕсен предприятийĕсенче 350 пин рабочи яхăн ĕçлет. Ҫак предприятисенчи рабочисемпе кăна мар, ытти мĕнпур металлурги завочĕсенчи рабочисемпе тăвакан коллективлă договорсен условийĕсем мĕнле пуласси не, чăннипе илсен, çав виçĕ монополи палăртса парать.

Калаçусем вăхăтĕнче профсоюз ĕç укçине, рабочисем ĕçсĕр тăрса юлнă тата ĕçлейми пулнă чухне тӳлекен пособисене ӳстерессишĕн тата ытти чылай требованисене тивĕçтермелле тăвассишĕн çине тăнă. Компанисен хуçисем вара профсоюз сĕнĕвĕсене йышăнман.

Анчах та предприятисен хуçисем рабочисен хăйсен прависемшĕн кĕрешес хастарлăхне тивĕçлипе шута илмен. Забастовка кунран-кун малалла пынă, забастовка тăвакан рабочисем вара предприятисен хуçисем умĕнче каялла чакман. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи пĕтĕм хурçăн вунă пайĕнчен тăхăр пайне туса кăларакан заводсенче ĕç чарăнни çĕршывăн пĕтĕм экономикинче палăрма пуçланă. Хăшпĕр йышши прокат çитми пулнă. Хурçă туса кăларас ĕçпе çыхăннă предприятисенче кăна мар, хурçă тата прокат ыйтакан нумай предприятисенче те ĕç чарăнса ларас хăрушлăх тухса тăнă.

Металлурги компанийĕсен лару-тăрăвĕ сехетрен-сехете начарланса пынă. Вĕсен забастовкăна пула тухса тăнă убыткĕсем, Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 2,5 миллиард доллара çитнĕ. Забастовкăна чарса лартасси вĕсемшĕн кирлĕ ĕç пулса тăнă. Асра тытас пулать: ытлашши хурçă запасĕ 10 миллион тонна ытла чакнă. Калас пулать: предприятисен хуçисем забастовка тăвакансене хирĕçле Тафт-Хартли законĕпе усă курма ĕмĕтленнĕ. Ҫак закон влаçсене забастовкăна 80 кунлăха чарса лартма право парать. Анчах США-ра президент суйлавĕ пулас умĕн темиçе уйăх кăна юлнă вăхăтра правительство çав законпа усă курма хăйман. (Суйлав кăçалхи ноябрь уйăхĕнче пулмалла).

Ҫак вăхăтрах Америка промышленноçĕн ытти отраслĕсенчи рабочисем забастовка тăвакан металлургсене нумай пулăшнă. Забастовка тăвакансемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕ, столярсемпе платниксен профсоюзĕ тата ытти нумай организацисем пĕлтернĕ.

Ҫак фактсене кура металлурги компанийĕсен ирĕксĕрех каялла чакма тивнĕ, калаçусене çĕнĕрен пуçлама килĕшмелле пулнă.

Июлĕн 27-мĕшĕнче хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн представителĕсемпе металлурги компанийĕсен представителĕсем коллективлă çĕнĕ договорăн тĕп условийĕсем пирки калаçса татăлнă. Договор срокĕ виçĕ çула пымалла. Темиçе кун иртнĕ хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăракан ыйтусене те татса панă.

Августăн 3-мĕшĕнче профсоюзпа тунă çĕнĕ коллективлă договор çине «Юнайтед стейтс стил корпорейшн», «Рипаблик стил корпорейшн» компанийĕсемпе ытти компанисем алă пуснă. Августăн 4-мĕшĕнче договор çине «Бетлихем стил компани» алă пуснă. Металлурги промышленноçĕнчи рабочисен 35 куна пынă забастовки çĕнтерӳпе вĕçленнĕ.

Ҫĕнĕ договор тăрăх компанисем сехет тăрăх тӳлекен ĕç укçине çулсеренех вăтам шутпа 15 цент ӳстерме сăмах панă. Рабочисене ĕçрен кăларас пулсан, вĕсене 52 эрне хушши укçа тӳлесе тăмалла тунă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи металлурги промышленноçĕн историйĕнчи пĕррремĕш хут ĕнтĕ рабочисем вырсарникунсемпе праçник кунĕнчи ĕçшĕн пысăкрах тӳлев илеççĕ. Ҫĕнĕ договор пĕррмĕшпе иккĕмĕш разрядри рабочисене тӳлекен ĕç укçи уйрăмлăхне пĕтерет. Ҫакна пула ĕç укçи сахал илекен рабочисенĕ сехетсерен тӳлекен ĕç укçи ӳсет.

Ҫакăнпа пĕр вăхăтрах металлурги компанийĕсем хурçă хакне ӳстерес шухăшпа пăрахман. Ҫакăнпа вĕсем хăйсене забастовка пирки пулакан тăкака çăмăллăнах тавăраççĕ. Августăн 6-мĕшĕнче «Юнайтед стейтс стил корпорейшн» компанийĕ хурçă хакне 8 доллар та 50 цент ӳстерни çинчен пĕлтернĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи металлурги промышленноçĕнчи рабочисен çĕнтерĕвĕ алюмини промышленноçĕнчи рабочисен забастовкине те влияни панă.

Июлĕн 31-мĕшĕнче вĕсем Америкăри «Алюминиум компани оф Америка» компанийĕпе тунă договор срокĕ тухнă. Ҫавăн пекех «Рейнольдс метал компанийĕпе» тунă договор срокĕ тухнă. Ҫакăнтан кăшт маларах предприятисен хуçисем профсоюз организацийĕсен требованийĕсене тивĕçтерме килĕшмен. Ҫакна май августăн 1-мĕшĕ умĕн çĕрле «Алюминиум компани оф Америка» завочĕсенче 18 пин рабочи забастовка пуçланă. Вĕсем ĕç укçине ӳстерме требовани лартнă. Вĕсем çумне «Рейнольдс метал компанин» 9 заводĕнче ĕçлекен 10 пин рабочи пĕрлешнĕ. Ҫак забастовкăра та рабочисем çитĕнӳ тунă. Августăн 9-мĕшĕнче «Алюминиум компани оф Америка» профсоюзпа договор тунă. Ҫакăнтан маларах, августăн 2-мĕшĕнче ку компани алюмини промышленноçĕнчи работниксен профсоюзĕн представителĕсемпе виçĕ çула пыракан контракт çине алă пуснă. Уп тăрăх мĕнпур категорисенчи рабочисен сехетри ĕç укçи 46 цент ӳсет.

Металлурги промышленноçĕнчи забастовкăсен пĕлтерĕшĕ çакăнта пулать: вĕсем «халăх капитализмĕ» текен суя теори саракан буржуалла теоретиксене, çак теоретиксем Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче классен кĕрешĕвĕ çук пек кăтартма хăтланнине татах тепĕр хут тăрă шыв çине кăларчĕç.

Е. ПАВЛОВ.

Артистсене тав тăваççĕ

Похвиçнĕ хулипе районĕнчи чăвашсен культурăллă пурнăçĕнче кăçал çулла пысăк событисем пулса иртрĕç.

Чи малтанах кунта Чăваш республикинчи куçса çӳрекен колхоз театрĕ килсе кайрĕ, ун хыççăн юрăпа ташă ансамблĕ концертсем пачĕ. Иртнĕ уйăхăн вĕçĕнче Чăваш академи театрĕн пĕр бригади чылай ялсенче, çавăн пекех Похвиçнĕ хулинчи нефтяниксен Культура керменĕнче те, Н. Айзманăн «Кай, кай Ивана» ятлă комедине лартса пачĕ. Куракансем спектакле кăмăлласа йышăнчĕç.

Чăваш республикинчи искусство работникĕсем кунта пурăнакан чăвашсене сума суса кашни çулах килсе кайнăшăн ĕççыннисем питех те савăнаççĕ тата артистсене чĕререн тав тăваççĕ. Ҫĕнĕ сезонта та театр пире паянхи пурнăçа кăтартакан лайăх пьесăсем лартса парса савăнтарĕ тесе шанас килет.

С. ДАНИЛОВ.

Куйбышев облаçĕ.

РАДИОПА ПАРАКАН ПЕРЕДАЧАСЕМ

Августăн 22-мĕшĕ

18.50—пионерсемпе шкул ачисен передачи. Иван Степанов çырнă «Колхозри пионерсен юррине» юрлама вĕрентни. 19.10—ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ передача. 19.30—чăвашсен инструментсемпе каламалли музыкин концерчĕ.

КПСС Шупашкар хула комитечĕ çумĕнчи каçхине вĕренмелли марксизм-ленинизм университечĕ

КПСС Шупашкар хула комитечĕ çумĕнчи каçхине вĕренмелли марксизм-ленинизм университетне вĕренме кĕме заявленисем йышăнасси малалла пырать. Университета аслă шкултан тата вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Университетра производствăран уйрăлмасăр икĕ çул вĕренмелле. Занятисем сентябрĕн 3-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

Кино

«РОДИНА». Августăн 22-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеансенче илемлĕ фильм «Есть такой парень», каçхи сеансенче — «За власть Советов».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00693 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.